**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.




« ХЫПАР »

Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07

Электрон почти: hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 19.06.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8198. Заказ 2332.

ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ

# Энтип чирленĕ...



**"Кĕнеке – пĕлӳ çăлкуçĕ" тесе ахальтен каламан. Вулама юратакан çын, хăть мĕн калăр та, ыттисенчен кăшт та пулин уйрăлса тăратех: темĕн те пĕлес килнипе те, лайăххи, ырри патне туртăннипе те, аталанăвĕпе те, тĕнче курăмĕпе те… Тепĕр чухне кĕнекех… малашлăх çулне – профессие – суйласа илме пулăшать. Шăпах çакăн пек шухăшсем çуралчĕç Элĕк район больницин тĕп тухтăрĕпе Василиса Архиповăпа калаçнă май.**

**Кăсăк та, кăткăс та...**

Тăвай районĕнчи Чутей ялĕнче çуралса Элĕк тăрăхĕнче тĕпленнĕскер калаçура тăван кĕтесне тăтăшах асăнать Василиса Владимировна: тавралăха та, çыннисене те. Шăпах сывлăх хуралĕн ĕçченĕсен уявĕ умĕн тĕл пултăмăр та сăмахăма малалла тăсса кайиччен çапах та професси патнех таврăнас килет. Мĕншĕн, мĕне тĕпе хурса вăл е ку профессие суйласа илет-ха çын? Пушшех те – сиплев ĕçне? Тухтăр ĕçĕ кăсăк кăна мар, кăткăс та, пархатарлă кăна мар, яваплă та-çке...

– Хам çак çула суйласа илнĕшĕн пачах та ӳкĕнместĕп, – пуçларĕ сăмахне Василиса Владимировна. – Медицинăра пĕтĕмĕшле 35 çул ĕçлетĕп. Халĕ те кăмăлпах такăрлататăп больница сукмакне. Чун кăмăллană ĕçре вăхăт иртни те, ывăнни те туйăнмасть. Чирлисене ура çине тăратма май килни вара çĕклентерет кăна. Çак туртăм – çынна пулăшасси – мĕн ачаран килĕшетчĕ мана. Хам шурă халат тăхăнассине пĕлсех тăнă тейĕн.

Ача чухнех алла "Букварь" çакланнăччĕ. "Э" саспаллирен пуçланакан "эмел" тĕлĕнче туйăм шайĕнче чарăннă-ши – пĕлместĕп. Анчах та çакă вĕçĕмех канăç памастчĕ. ...Энтип чирленĕ. Энтип эмел ĕçнĕ. Энтип сывалнă... Çак шухăша палăртакан вăчăра пыратчĕ унта. Энтип çинчен мана тăтăшах вуласа паратчĕç. Анчах та пуçăма ниепле те шăнăçаймастчĕ – сывалнă тăк мĕн туса выртатьха апла Энтип, мĕншĕн ура çине тăмасть? Сывă çынсем утса çӳреççĕ-çке, вăл вара çаплах выртать... Çук, Энтипе ура çине тăратмаллах... Ĕмĕт чăнлăха çаврăнчĕ. Медицина çул-йĕрне Канашри училищĕрен пуçларăм. Чăн та, тухтăр пулас ĕмĕт малтанах çуралма та вăтаннă-тăр. Эпир çемьере саккăрăн ӳснĕ. Атте-анне капла та çăмăлах пулман-тăр. Аслă пĕлӳ илес тесен татах вĕсенчен пулăшу ыйтма тивет... Тăвансен хушшинче пушшех те медицинăна суйласа илнисем çук. Анчах та сывлăх хуралĕнче медицина сестринче ĕçлеме тытăнсан ĕмĕт вăйланчĕ – тухтăр пулмах тĕв турăм. Халĕ шухăшлатăп та хам тĕлĕнетĕп. "Вĕренме кĕреетĕпи-ха?" – текен шухăш пулман та вĕт манăн, студентсен йышне лекиччĕнех медфакран "хĕрлĕ" дипломпа вĕренсе тухас ĕмĕт çуралнă. Палăртни каллех пурнăçланчĕ. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетĕнче педиатри енĕпе малтанах касхи уйрăмра ăс пухрăм, каярахпа кăнтăрлахине куçарчĕç. Алла вара чăнласах хĕрлĕ диплом илтĕм.

Унтанпа миçе "Энтипе" ура çине тăратман-ши ырă кăмăллă, çирĕп чунлă, мал ĕмĕтлĕ çак тухтăр? Тĕрлĕ больницăра вăй хунă хыççăн шăпа Элĕке илсе çитернĕ. Çуралнă тăрăхпа та çыхăну татăлман.

**Кама кушак е йытă çури, кама... пăру**

Кукашшĕпе кукамăшĕ, аякра пурăннипе-ши, яланах шăпăрлансемшĕн питĕ çывăх. Архипов-кĕçĕннисем те /çемьере икĕ ывăл ӳснĕ/, ашшĕ-амăшĕ Тăвай тăрăхне хăнана пуçтарăннине пĕлсен, хăпăл-хапăлах çула тухма хатĕрленнĕ. Ялта пурăнакан çын, паллах, выльăх-чĕрлĕх усрать. Пĕррехинче хăнана çитнĕ çĕре çывăх çыннисен шăпах ĕне пăрулану-мĕн. Пĕчĕк Сашук ун чухне шкула та кайман-ха, анчах та ун чухнех хуçалăх пирки шухăшлама та пĕлнĕ-тĕр çав. "Мĕнле вара ку – сирĕн икĕ ĕне, пирĕн пĕрре те çук?" – тинкернĕ шăпăрлан кукашшĕне куçран. Ырă кăмăллă арçын çийĕнчех пăрăва... Элĕке илсе кайма сĕннĕ. Анчах та тин кăна уйрăм çурта куçма хатĕрленекен Архиповсен вите тавраш те çук. Район центрĕнче тĕпленнĕскерсем выльăх тытасси пирки шухăшламан та темелле. Чăрмавĕ сахал-им? Анчах Сашук та лăпланма пĕлмен. Ĕне кирлĕ! Урăх сăмах та çук. Çапла çулталӑкран хайхи пăрăва Элĕке илсе килмех тивнĕ. Паллах, сарайĕ-вити маларах ӳссе ларнă. Пĕр-икĕ уйăх йăпаннă хыççăн ача пăрупа выляса ывăннă тетĕр-и? Пачах тепĕр май, пĕчĕкскер пĕтĕм яваплăха хăй çине илнĕ. Çитересси, тасатасси, каярахпа тата сăвасси те – нимĕн те хăратман ăна.

Яваплăх туйăмне курса-ши, выльăх-чĕрлĕхе, каярахпа вĕсен йышĕ самай ӳсрĕ, ачасене шанса хăварса инçе çула та пĕр шикленмесĕрех тухаттăмăр, – каласа кăтартать тĕлĕнмелле маттур каччăн амăшĕ. Çапла, Саша ӳссе каччă пулнă ĕнтĕ. Чĕрчун тĕнчипе тĕлĕнмелле çывăх чунлăскер – каярахпа кукашшĕнчен тиха та илсе килесшĕн пулнăскерне январа килĕнчех хăварма аран ӳкĕте кĕртнĕ вĕт – малашлăхне çапах та техникăпа çыхăнтарнă. Халĕ Саша Мускаври аслă шкулта вĕренет. "Текех ĕне пăхма каяймăп ĕнтĕ", – тенĕ шкултан вĕренсе тухнă арçын ача. "Сирĕн пулăшăвăсăр эпир те выльăх усраймăпăр", – ассăн сывланă амăшĕ, ывăлĕсене пĕрин хыççăн теприне тăван килтен вĕçтерсе кăларнă май.

**Тăван сăмах чуна çывăхрах**

...Çул чупать. Вăхăта çаварлăхлама çук. Маттур каччăсен кукамăшĕ Зоя Яклашкина 88 çула çитнĕ. Юратнă амăшне хĕрĕ хăй патне Элĕке илсе килме тăрăшать. Ытти ачисем те хисеплĕ ватта хăйсем патне йыхравласах тăрăççĕ. Зоя Матвеевна чăваш хаçачĕ-журналĕпе питĕ туслă /ахăртнех, вулас туртăм хĕрне шăпах çывăх çыннинчен куçнă/. "Чăваш хĕрарăмĕ" хаçатпа тахçанах туслă çыхăну йĕркеленĕ çемье. Юратнă кăларăма Василиса Владимировна амăшне валли те, хăйне валли те çырăнать. Çавăн пекех "Хыпарăн" шăматкунхи кăларăмне, "Сывлăх" хаçата, "Тăван Атăл" журнала кăмăллать туслă çемье.

– Тăван чĕлхепе тухакан кăларăмсене яланах вулатпăр, – тет чăваш хĕрарăмĕн сăнарне тĕслĕх шайĕнче тытса пыракан тĕп тухтăр. – Тăван сăмах çапах та чуна çывăхрах.

**Кивелмен-ватăлман ыйту**

Медицинăри паянхи çивĕч ыйтусене хускатмасăр та иртеймерĕмĕр Василиса Владимировнăпа. Анчах та вăл хăйсен кăткăслăхĕсем çинче мар, çынсен сывлăхĕ пирки ытларах чарăнса тăчĕ. Элĕк районĕ те этемлĕхрен уйрăм аталанмасть. Чирсем çамрăкланса пыни пăшăрхантарать, уйрăмах – онкологи тата чĕрепе юн çаврăнăшĕн чирĕсем. Сăлтавĕ мĕнре? Çакна ăсчахсем те татса калаймаççĕ. Районта "васкавлă пулăшу" 2 бригади ĕçлет. Юлашки вăхăтра вĕсене тăтăшрах чĕнме пуçлани сисĕнет. Сăлтавĕ каллех юн çаврăнăшĕн чирĕсемпе çыхăннă. Çав вăхăтрах эрех-сăрапа виçине пĕлмесĕр айкашакансем патне чĕнесси те ӳснĕ-мĕн. Ирĕксĕрех кивелме-ватăлма пĕлмен ыйту çуралать: мĕн тумалла? Паллă ĕнтĕ, нумай чир сăлтавĕ – стресс. Мĕнле сыхланмалла унран?

– Çын шухăшсăр пурăнаймасть, – тет Василиса Владимировна. – Ир тăрсан та, каç выртсан та шухăш явăнать пуçра. Çавă ĕнтĕ вăл стресс тени. Мĕнле сыхланăн унран? Çынна хăйĕн сывлăхĕ пирки хăйнех ытларах шухăшлаттарас килет. Калăпăр, ирхине зарядка тума мĕн чăрмантарать пире? Ĕненĕр, ятарлă çак хускануסене тăтăш туниех сывлăха питĕ ырă витĕм кӳрет. Ку – сывлăха çирĕплетес енĕпе тунă пĕрремĕш утăм. Пирĕн республикăра физкультурăпа спорта аталантарас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Халĕ сывлăх керменĕсем нумай ӳсрĕç. Ӳркенмелле мар кăна. Çав вăхăтрах çынсене çапах та лавккара туяннă апатçимĕç сахалрах çиме сĕнес килет – хамăр ӳстерни-туса илнине нимĕн те çитмĕ.

Çапах та чи çăмăлли – сĕнӳ парасси теççĕ. Эпĕ иккĕленерех пăхнине тĕлентермĕш çак хĕрарăм /ара, ытла та пур енчен те пултаруллă та.../ куçран пăхсах ăнланчĕ курăнать, ыйтса ĕлкĕриччен хăй кулярах хуравларĕ:

– Пĕрле вĕреннĕ юлташсем тĕл пулсан: "Халĕ те хушпна та-и-ха эсĕ?" – тесе ыйтаççĕ. Пысăк спорт мар çакă, такам хушнипе вĕрентнипе те тумастăп ăна, чун ыйтнипе кăна. Кашни кун зарядкăран пуçланать. Ирсерен чупасси-утасси çамрăк чухнех йăлана кĕнĕ. Йĕлтĕрпе те туслă эпĕ. Халĕ тата акă коньки çине тăтăм. Наци пĕр кросĕнчен те юлмастăп. Халĕ вара тахçанхи ырă йăла каялла таврăнчĕ акă – ГТО нормисене тултарасси. Пĕлсех тăрăр – Элĕк райбольницинче спортпа туслисен, асăннă нормативa пурнăçлакансен йышĕ ӳссех пырĕ.

Кун çумне хушса урăх мĕн калăн? Элĕксен хăйсен тухтăрĕсенчен тĕслĕх илмелли кăна юлать.

**Рита АРТИ.**



**Элĕк район больницин коллективĕ 270 çынна пĕрлештерсе тăрать. Вĕсенчен 39-шĕ – врач, 130 вăтам персонал, 63 кĕçĕн персонал тата пулăшу ĕçĕнче вăй хуракансем. Çак йышран 32% – аслă категориллĕ. 4 тухтăр тата 1 медсестра – "тава тивĕçнисен" йышĕнче. Сывлăха сыхлас ĕçĕн отличникĕ те пур коллективра. Больница патшалăх программисемпе анлă усă курать – "Земство тухтăрĕ" программăпа килĕшӳллĕн Элĕке çамрăк 7 тухтăр ĕçлеме килнĕ. Вĕсене пур условипе те тивĕçтернĕ.**

**Паянхи ыйтусемпе килĕшӳллĕн пур тухтăр ĕç вырăнне те автоматизациленĕ. Чирлисен историйĕн электронлă вариантне йĕркелесе пымашкăн пур условипе тивĕçтернĕ.**

**Районта пĕтĕмĕшле практика врачĕн 7 офисĕ, 16 ФАП. Хирлеппуç тата Мăн Ямаш ялĕсенче пурăнакансене тĕслĕх 2 фельдшер пункчĕ йышăнать. Республика кунĕ тĕлне виççĕмĕшне усма хатĕрленеççĕ.**



АСТĂВĂМ

# Унăн чĕре вучĕ ыттисене кусçнă

**Кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл Мишшин Шупашкарти палăкĕ умĕнчен иртсе каймассерен унăн сăвă йĕркисем аса килеççĕ. Шкулта вĕренни яланлăхах пуçра çырăнса юлнă. Хальхинче эпир, унăн пултарухне сума сăвакансем, çакăнта асăну митингне пуçтарăнтăмăр. Поэтăн чĕри юлашки хут тапнăранпа 93 çул çитрĕ. Çирĕм иккĕри чăваш каччи Украинăра ĕмĕрлĕх канлĕх тупнă.**

"Пушкин, Лермонтов пек çынсем вилмеççĕ. Вĕсем чĕррисенчен те чĕрĕрех", – сăмах илчĕ Çеçпĕл Мишши фончĕн ертӳçи, "Хыпар" Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ, Чăваш халăх поэчĕ Валерий Туркай. Поэтпа сывпуллашнăранпа мĕн чухлĕ ытларах вăхăт иртет, унăн пултарулăхĕнчен çавăн чухлĕ ытларах тĕлĕннине палăртрĕ вăл. Çавнашкалах 3 çул каялла республика ертӳлĕхĕпе пĕрле асăну кунне паллă тунине аса илчĕ. Ун чухне республика тулашĕнчи йăхташăмăрсем те йышлă килнĕ.

Валерий Владимирович Çеçпĕл Мишшине тăван тăрăха куçарса килейменшĕн те пăшăрханса калаçрĕ. Халĕ Украинăна епле тухса кайăн?

ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ преми лауреачĕ Юрий Попов унăн сăввисем тăван халăха аталанма хăват парса тăни çинчен каларĕ.

Турцире, Казахстанра, Пушкăртстанра... чăваш сăмахне саракан ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Раиса Сарпи "Усă кăмăлпа" сăввине вуларĕ. Çеçпĕл чунлă çынсем Улăп-сăвăçа ырăпа аса илнине палăртнă вăл унта. Поэтăн ĕçне малалла тăсакан йышлăран хăватлă янăрать тăван чĕлхе.

Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Çамрăксен театрĕн тĕп режиссерĕ, куçаруçă, поэт Иосиф Дмитриев кăвар чĕреллĕ сăвăç çинчен пирĕнтен те ытларах пĕлнĕн туйăнать. Вăл 1972 çулта Киеври А.Довженко ячĕллĕ киностуди ӳкернĕ фильмра Çеçпĕл Мишшине сăнарланине аса илтерес килет. Ахальтен мар поэт сăмахĕсем пуçа та, чĕрене те яланлăхах кĕрсе вырнаçнине палăртрĕ вăл.

"Чăвашла спектакльсене ача сачĕсенче кăтартаймастпăр, мĕншĕн тесен унта тăван чĕлхене ăнланмаççĕ", – çав вăхăтрах пăшăрханнине пытармарĕ Иосиф Александрович.

Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев çак палăка усрă чухне те сăмах илнĕ. "Çеçпĕл пултарулăхĕнчен хăй вăхăтĕнче Хусанкай та, Шелепи те тĕлĕннĕ. Поэтăн чĕре вучĕ, хĕрӳлĕхĕ ыттисене кусçнă", – терĕ вăл.

Çеçпĕл Мишши музейĕн ертӳçи Антонина Андреева поэта халаласа литература тĕлпулăвĕсем йĕркелени çине пусăм турĕ. Вĕсем хамăр тăрăхра та, республика тулăшĕнче те иртĕç.

Асăну кунĕнче Çеçпĕл Мишшин вилĕмсĕр сăвă йĕркисем хăпартлантарчĕç. Хальхи сăвăçсем хăйсен çĕнĕ ĕçĕсемпе паллаштарни те кăмăла çĕклерĕ.



**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

Василий КУЗЬМИН сăнӳкерчĕкĕсем.



# Донецкпа Луганскри ачасене пулăшма

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев Донецк тата Луганск облаçĕсенчи ачасем валли çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕ умĕн гуманитари пулăшăвĕ пухас енĕпе йĕркеленĕ ыркăмăллăх акцине ырланă.

"ÇĕнРаççейри Пĕлӳ кунĕ" акцие Раççей Президенчĕ çумĕнчи Ача прависен уполномоченнăйĕ Павел Астахов пуçарнă. Унăн тĕллевĕ – Донецкпа Луганскри ачасем валли кĕнеке-тетрадь пухасси, Иловайск шкулне, Луганскри ача садне юсама пулăшасси. Акцие Чăваш Ен те хутшăнать. Республикăри Ача прависен уполномоченнăйĕн аппаратĕнче июлĕн 14-мĕшĕччен канцеляри таварĕсем, портфель, ранец, ача-пăча кĕнекисем, сĕтелçи вăййисем, спорт тумĕ йышăнаççĕ. Вĕсене курупкана хумалла, унта мĕн пуррине палăртса çырмалла. Кăмăл пуррисен уксăн та пулăшма юрать, ăна омбудсменăн аппаратне июлĕн 10-мĕшĕччен пырса акт çырса памалла.

Тĕплĕнрех çак телефонпа ыйтса пĕлме пулать: /8352/ 62-41-05. Кăсăклантаракан информацие http://chuvashia.rfdeti.ru/ тата ombudsman@cap.ru сайтсенче тупма май пур.

ÇУЛ-ЙĔР

# Тĕпрен юсаса çĕнетме

Федераци хыснинчен республикăна çитес вăхăтра 491,945 млн тенкĕлĕх трансферт çитмелле. Çак укçа-тенкĕпе Мускав кĕперне 6 йĕр таран, регион тата муниципалитетсен хушшинчи ялсен çумĕпе иртекен çулсене сарĕç. Тĕп хулари Сĕнтĕрвăрри çулне Хусалăх урамĕнчен пуçласа Машинăсем тăвакансен касне çитиччен тĕпрен юсаса çĕнетесшĕн. Федераци бюджетĕнчен уйăрнă укçапа Шупашкарти Айхи проспектне хăтлăлатĕç, Фучик урамĕпе çыхăнтаракан транспортăн 2 сийлĕ сыппине те вĕçне çитересшĕн. Çавăн пекех ялсенчи çулсене юсама, çĕннисене хута яма палăртаççĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Атăл хĕрри мĕншĕн çӳп-çаплă?

**Марина ТУМАЛАНОВА**

**Шăрăхра халăх килте ларасшăн мар. Пурне те сулхăн вырăн илĕртет. Шыв хĕрри пушшех илĕртет. Ахальтен мар çăмăл машинăсем Атăл еннелле çул тытаççĕ. Унта выляма, хĕвел çинче хĕртĕнме, шашлăк пĕçерме вырăн çителĕклех. Кăмăл пулсан шыва кĕме те, кимĕпе ярăнма та, пулă тытма та май пур. Пĕрисем – килеççĕ, теприсем – каяççĕ... Халăх кумать кăна.**

**...Çие юлнă хĕрарăмпа мăшăрĕ маларах çитсе йывăç айне вырăн йышăннă. Хуранпа апат çакса янă. Яшка вĕреме кĕнĕ ĕнтĕ. Хăйсем çывăраççĕ. Юнашарах çĕлен шуса иртнине те сисмерĕç. Килте ыйхă вĕçнĕ-ши вĕсен? Апла-и, капла-и, усă сывлăшра çывăрма лайăхрах.**

**Çакăнта нумай ачаллă çемьесене те хăтлă. Пĕрисен шкул çулне çитмен вищĕ пепки хывăнса пăрахнă та çыран хĕррипе чупать. Аслăраххисем ăшăнса çитмен шыва чĕркуççи таран кĕрсе тухаççĕ. Çапла майпа кĕлеткене пиçĕхтереççĕ. Вĕсене амăшĕ кусран вĕçертмест. Кĕçĕнни – ашшĕн аллинче. Вăл та хăйне лăпкă тытать. Кăшт кутăнлашма пуçласанах ашшĕ ăна самолет майлă вĕçтерет. Выляма юратаканскер сасăпах кулать.**

**Теприсен вищĕ хĕрачи чылайччен рак хуранĕ пуçтарчĕ. Кайран пĕри хăйăр керменĕ ăсталама пуçларĕ, иккĕшĕ бадминтонла вылярĕç.**

**Кунта ачасене хавасла, ашшĕ-амăшне канлĕ. Тата çемьепе ирттернĕ вăхăт чылайччен асра юлать.**

**Шашлăк пĕçерсе çинĕ хыççăн нумай тăмарĕç çак çемьесем, машинăсене ларса киле васкарĕç. Çав çынсем хăйсем хыççăн çӳп-çап хăвармарĕç. Пĕр хут усă курмалли хатĕр-хĕтĕре пуçтарса кайма йывăри? Çатăркана хулана çитсенех пăрахса хăварма пулать. Тĕпренчĕкĕсене те ырă çак йăлана хăнăхтараççĕ вĕсем. Тĕрĕссипе, çакă килте те, урамра та кирлĕ.**

**Анчах Атăл хĕррине кам нĕрсĕрлетнĕ? Унта-кунта кĕленче ванчăкĕ йăванать – хăйăр çинче çарран çӳреймĕн. Пирус тĕпĕсене пăрахса хăварнă. Юрăхсăра тухнă япала куписем тавралăха илемсĕрлетеççĕ. Хăш-пĕр хатĕре çунтарса та пăхнă. Çын хыççăн камăн пуçтармалла? Волонтерсем çутçанталăка çӳп-çапран тасатма тăрăшаççĕ-ха. Кирлĕ мар япаласене миххи-миххипех тиесе яраççĕ. Анчах вĕсем пур çĕре çитеймеççĕ. Çитменнине, тавралăх вараланса пырать. Çапах та мĕншĕн хамăра хисеплеме пĕлместпĕр-ши?**

**Унччен те пулмарĕ, çывăхри пĕр хĕр çи-пуçĕпех шыва кĕрсе кайрĕ. Сăнасарах пăхрăм та – ӳсĕр иккен. Юрать-ха таçта çитиччен ишсе каймарĕ. Кунта çăлавçăсем те çук. Машина патĕнче тантăшĕ каччăпа ыталашса ларни курăнать. Кăштахран çав çамрăк çырана тухса çитиччен выртрĕ. Пусĕ хăйăрпа вараланчĕ. "Эсир ман пек пултараймастăр", – ура çине тăрсан пуçларĕ хайхискер йĕкĕлтешме. Водитель чĕнмерĕ. Унтан хĕрсем каллех çине-çине черкке çĕклерĕç. Ура çинче аран-аран тăнине те туймарĕç-ши? Пĕр кĕленчене иккĕшех пушатрĕç. Ĕçсе ӳсĕрĕлнĕскерсем юрлама-ташлама хăтланса пăхрĕç. Ку концерт никамăн кăмăлне те каймарĕ. Çавнашкал канни киленӳ кӳчĕ-ши? Иккĕлентерет. Мĕншĕн виçине пĕлмесĕр ĕçмеллечĕ çав хĕрсен? Йĕри-таври халăхран вăтанма та пĕлмерĕç мăнтарăнсем.**

**Тепĕр машинăпа килнĕ каччăсемех хăйсене йĕркеллĕ тытрĕç. Шыва кĕрсе тухсан, кимĕпе ярăнсан пуçтарăнса каялла кайрĕç.**

**Хăшĕ-пĕри шыв хĕррине кальян та илсе килнĕ. Çамрăксем, ахăртнех, пĕр-пĕрне курса çав хатĕрсĕр çула тухмаççĕ. Пĕлтĕр общество вырăнĕсенче пирус туртма чарчĕç. Анчах та саккунра кальян пирки каламан. Вăл сиенсĕртерех теççĕ те...**

**Пăрахут е метеор иртсе кайсан хумсем çырана пырса çапаççĕ. Таçта аякра пулă вылять. Пирĕн, канма килекенсен, тавралăх илемĕпе киленме пĕлесчĕ, çутçанталăка сиен кӳрес марччĕ.**

**Хамăр чĕртнĕ вутта сӳнтерсе хăвармаллине, паллах, кашниех пĕлет. Пирус тĕпĕ те çутçанталăка шар кăтартма пултарать. Чрезвычайлă лару-тăру министерствин ĕçченĕсем те инкек ан пултăр тесе асăрхаттарсах тăраççĕ: тĕлпулусем йĕркелеççĕ, листовка кăлараççĕ, аншлаг вырнаçтараççĕ.**



РЕСПУБЛИКА КУНĔ

# Уявра пĕрле савăнар, туссем!



**Часах Республика кунне паллă тумашкăн пирĕн тăрăха йăхташăмăрсем, тĕрлĕ наци çыннисем килсе çитĕç. Мĕнпе асра юлĕ, мĕнпе савăнтарĕ кăçалхи уяв?**

Шупашкарти VIII "Регионсем: экономика ÿсĕмĕн çĕнĕ çăлкуçĕсем" экономика форумне irttерме хатĕрленни çинчен экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин каласа кăтартнă. Форум Оперăпа балет театрĕнче, Наци библиотекинче, промышленноç предприятийĕсенче иртĕ. Мероприятие 600-е яхăн çын хутшăнма кăмăл тунă.

Çĕртме уйăхĕн 24-27-мĕшĕсенче тĕп хулари Пăр керменте "Регионсем – чикĕсĕр ĕçтешлĕх" курав иртĕ. Унта Раççейри 15 регионти, Турципе Японири, Францири тата ытти çĕршыври 110 ытла организаци хутшăнĕ.

ЧР культура министрĕн çумĕ Татьяна Казакова пĕлтернĕ тăрăх, уяв вăхăтĕнче пысăк 7 проект пурнăçа кĕрĕ. Çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕнче халăх пултарулăхĕн "Раççей çăлкуçĕсем" фестивалĕ 23-мĕш хут иртĕ. Унта çĕршывăн кашни кĕтесĕнчен, Беларуç Республикинчен хăнасем хутшăнĕç. Тепĕр кун хăнăхнă йăлапа вĕсем Наци библиотекинчен пуçласа Хĕрлĕ лапама çити юрласа-ташласа утĕç.

Пĕтĕм Раççейри "Руç ăстисем" конкурсра 13-мĕш хут тупăшĕç алĕç маçтăрĕсем. Патшалăхăн 12 субъектĕнчи тата Чăваш Республикинчи 50 ытла ăстан ĕçне 10 номинацире хак парĕç. Вĕсем валли Чăваш наци музейĕн шалти картишĕнче вырăн уйăрнă.

Çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕнче Чăваш тĕррин музейĕ ĕçлеме пуçлани – асра юлакан тепĕр пулăм. Вăл Карл Маркс урамĕнчи 32-мĕш çуртра вырнаçнă. Ĕмĕте пурнăçа кĕртмешкĕн ЧР Пуçлăхĕн гранчĕ пулăшнине палăртса хăвармалла. Унта тĕрĕ историйĕпе, Алькешри "Паха тĕрĕ" фабрикăн çитĕнĕвĕсемпе паллашма пулĕ. Каярах ăсталăх класĕсем йĕркелемелли пÿлĕмсем те уçăлĕç.

"Хальхи вăхăтри этника культури" ыйтупа йĕркелекен Пĕтĕм Раççейри ăслăлăхпа практика конференцине хутшăнас текен те йышлă. Ăна Чăваш наци музейĕнче, К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх драма театрĕнче йĕркелĕç.

Культура программисен республика дирекцийĕн пуçарăвĕпе иккĕмĕш хут йĕркелекен "Халăх станцийĕ" проекта çĕршыври пилĕк регионтан çĕре яхăн çын хутшăнĕ.

2021 çулта Александр Невский кнеç çуралнăранпа 800 çул çитет. Çавна май ун ячĕллĕ продюсер центрĕн пуçарăвĕпе "Çветтуй Александр Невский" фестиваль пуçланĕ. Вăл çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕнче 18 сехетре Шупашкарта старт илĕ.

Республика кунĕнче Пĕтĕм чăвашсен Шупашкарти Акатуйне йăхташăмăрсем виççĕмĕш хут пуçтарăнĕç. Вячеслав Оринов режиссер каланă тăрăх, мероприяти Хĕрлĕ лапамра кăнтăрла уçăлĕ, унтан Анне палăкĕ çывăхĕнчи лапама куçĕ. Пултарулăх ушкăнĕсем вăйă картине тăрĕç, чăвашсен йăли-йĕркине кăтартĕç.

"Туслăх кăшăлĕ" фестиваль те наци культура пĕрлешĕвĕн ушкăнĕсене Хĕрлĕ лапама пуçтарĕ. Çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче 13 сехетрен пуçласа вĕсен пултарулăхĕпе киленме май пулĕ.

Каярах Раççейри – Литература, Чăваш Енри Константин Иванов çулталăкне, Аслă Çĕнтерÿ 70 çул тултарнине, Чăваш автономи облаçĕ йĕркеленнĕрпе 95 çул çитнине халалласа хатĕрленĕ лапамсемпе паллашма пулĕ. Çак тĕллевпе уйăрнă вырăн Шупашкарти Çеçпĕл Мишши скверĕнчен Республика лапамĕ таранччен тăсăлĕ. Унта 16.00-18.00 сехетре çитме ĕлкĕрмелле.

Каçхине Атăл кÿлмекĕнчи сценăна чăваш эстрада артисчĕсем йышăнĕç. Республика кунĕнче хулан кашни кĕтесĕнче, çавнашкалах районсенче юрă-кĕвĕ янăрĕ. Спорт ăмăртăвĕсенче те хăвăрăн вăя тĕрĕслеме пултаратăр.

Канаш районĕ те хăна пăхма хатĕр. Унта вырăнти артистсемпе пĕрле тĕрлĕ тăрăхран килнĕ сцена ăстисем пысăк концерт кăтартĕç. Çавнашкалах туй кĕпиллĕ хĕрсен парачĕ, ача кÿмисен фестивалĕ иртĕ.

Çĕртме уйăхĕн 23-24-мĕшĕсенче каçхи Шупашкар тÿпине "Аслă Çĕнтерĕве – Мухтав" фейерверксен фестивалĕн çути эрешлĕ. Канаш тăрăхĕнче те вут-çулăмлă фаер-шоу йĕркелеме палăртнă.

Уява килĕр, пĕрле савăнăпăр! Республика кунне мĕнле уявлани çинчен çитес номерте тĕплĕнрех çырăпăр.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

Автор сăн ÿкерчĕкĕ.

СПОРТ

# Чăваш Ен тĕнче шайĕнчи çăлтăрсене йышăнать

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

Сакăр сехетре çăмăл атлетика командисен Европа чемпионатне официаллă майпа уçрĕç. Театрализациленĕ постановкăна Чăваш Енри пултарулăх коллективĕсем те, спорт федерацийĕсен представителĕсем те хутшăнчĕç.

Уяв кÿлмекрен пуçласа "Олимпийский" стадиона çитиччченех тăсăлчĕ. Паянпа ыран вара Европăри чи пултаруллă команда ятне тивĕçессишĕн спортсменсем спорт 40 тĕрлĕ дисциплининче: тĕрлĕ дистанцие чупасси, диск, йĕтре тĕртесси, шăчăпа, тăршшĕне тата çÿллĕшне сикесси, чăрмавсем урлă 100, 400 тата 3000 метрлă дистанцисене чупасси, эстафетăсенче тата ытти те – тупăшĕç.

Раççей чысне 48 спортсмен хÿтĕлет. Вĕсен йышĕнче Чăваш Ен атлечĕ Анжелика Сидорова та пур.

Ăмăртусем "Олимпийский" стадионта иртеççĕ. 1977 çулта уçăлнăскерне чемпионата виçĕ çул яхăн хатĕрленнĕ хушăра юсаса çĕнетнĕ. Унта халĕ конференц-зал, пресс-центр, хывăнса тăхăнмалли тата хуçалăх пÿлĕмĕсем пур. Çавăнпах унта тĕнчери чи пысăк, хăватлă ăмăртусене йышăнма та намăс мар.

Пĕтĕмĕшле çак кунсенче пирĕн пата ют çĕршывран икĕ пин хăна çитрĕ. Вĕсен йышĕнче çăмăл атлетикăра тĕнчипе палăрнă çăлтăрсем те: 100 метрлă дистанцие çутă ÿтлисен йышĕнче 10 çеккунтран хăвăртрах парăнтарнă француз Кристоф Лемэтр, унăн шăчăпа сикекен ентешĕ, тĕнче рекордсменĕ Рено Лавилленье, сăнă ывăтассипе тĕнче чемпионĕ Теро Питкамяки /Финлянди/, йĕтре тĕртессипе палăрнă Польша спортсменĕ Павел Файдек – пур. Старта çавăн пекех хупă вырăнта 60 метр чупассипе тĕнче тата Европа чемпионĕ Ричард Килти /Аслă Британи/ тухĕ.

Хĕрарăмсенчен Шупашкара 1500 метр чупакан чемпион Абебе Арагави /Швеци/ килнĕ. Старт протоколĕсенче йĕтре тĕртессипе Польшăри Анита Влодарчик чемпион, çÿллĕшне сикекен Рут Бейтиа испанка, сăнă ывăтассипе палăрнă Кристина Обергфелль /Германи/, Ольга Саладуха /Украина/, Марина Арзамасова /Беларуç/ ячĕсем те пур.

Раççей пĕрлештернĕ командин йышĕнче те паллă ят сахал мар. Вĕсен йышĕнче Александр Меньков, Екатерина Конева, Сергей Шубенков, Мария Кучина, Анжелика Сидорова, Дарья Клишина тата ыттисем те.

Ăмăртусене тÿрĕ эфирпа та пăхма пулать. Вĕсене Евроспорт телекуравпа июнĕн 20-мĕшĕнче – 15.00, июнĕн 21-мĕшĕнче 15.30 сехетре кăтартма пуçлĕç. "Россия – 2 "каналпа июнĕн 20-мĕшĕнче – 16.00, июнĕн 21-мĕшĕнче 17.00 курма пулĕ. Çавăн пекех Наци телекуравĕ те паян каçхи 16.00, ыран каçхи 17.00 сехетре тÿрĕ эфира тухĕ.

Сăмах май, стадиона кĕмелли билетсем те пĕтмен-ха.

Кĕçнерникун командăсем вĕçсе килнĕ самолетсенчен пĕринче Европăри çăмăл атлетика ассоциацийĕн президенчĕ Свейн Арне Хансен норвежец та çитнĕ. Аэропортра ăна ЧР спорт министрĕ Сергей Мельниковпа РФ çăмăл атлетика федерацийĕн ертÿçин тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Вадим Зеличенок кĕтсе илнĕ. Чаплă хăна ăмăртусем кăсăклă та çÿллĕ шайра иртессе шаннине, çанталăк лайăх пуласса кĕтнине пĕлтернĕ. Кăçал Европа чемпионачĕ иртменнине шута илсе ку ăмăртун сумĕпе пĕлтерĕшĕ пушшех пысăккине палăртнă вăл.

Ăмăртусем тивĕçлĕ шайра иртчĕр тесе хăнасене пулăшма опытлă 350 волонтера явăçтарнă. Вĕсенчен чылайăшĕ – республика ывăлхĕрĕ. Ăмăртусене хаклакан 200-е яхăн тÿререн 60-шĕ – Чăваш Ен представителĕ.

Германи – çăмăл атлетика командисен Европа чемпионачĕн хальхи чемпионĕ. Ку ăмăртура икĕ хутчен çĕнтернĕ. Шупашкара килме командăн лидерĕсем кăмăл тунă. Кристина Обергфелльпе Рафаэль Хольцдеппесĕр пуçне çĕршыв чысне Роберт Хартинг, Давид Шторль тата Кристина Шваниц хÿтĕлĕç.

Раççей команди улшăнманпа пĕрех, унта яланхи çынсемех темелле. Александр Меньков, Мария Кучина, Екатерина Конева, Сергей Шубенков, Анжелика Сидорова, Александр Федоров. Сергей Шубенковпа Александр Федоров икĕ çул харăс хăйсен дисциплининче çĕнтерÿçĕ пулса пынă. Кăçал та вĕсене çавнах сунатпăр. Дарья Клишина, Анастасия Баздырева, Елена Коробкина тата ытти çамрăксене те шанатпăр.

Франци – 2014 çулхи чемпионат бронза призерĕ. Хальхинче команда чи пултаруллисене пухнă. Çавăнпах малтисен йышне ним мар лекме пултараççĕ. Çĕнтерес шанăç та пур. Ку команда йышĕнче Рено Лавилленьесĕр пуçне спортăн ытти çăлтăрĕ те сахал мар.

Беларуç команди чемпионатăн Суперлигинче – çĕнĕскер. Пĕлтĕр Таллинта иртнĕ Чи пысăк лига турнирĕнче чи хастарри те матturри пулнăран вăл кăçал Шупашкара лекме тивĕçнĕ. Ку командăра та чемпион сахал мар. Çăмăл атлетикăпа кăсăкланакансемшĕн Алина Талай, Марина Арзамасова, Оксана Менькова, Юлия Нестеренко тата ытти ят – ют мар.

Финлянди те кăçал ку лигăна пилĕк çултан таврăннă. Кун пек тума пĕлтĕрхи Пĕрремĕш лигăра пиллĕкмĕш кăтартупа палăрни пулăшнă. Финсен командинчи спорт çăлтăрĕ – Теро Питкамяки. Вăл сăнă 88 метр ытла тăршшĕне ывăтнипе паллă.

Аслă Британи команди пилĕк çулта пьедестал çине виçĕ хутчен хăпарнă. Чи ăнăçли – 2010 çулхи иккĕмĕш вырăн. Спортсменсен йышĕнче çĕршывăн çĕнĕ рекордсменки – 19 çулти Дина Ашер-Смит. 100 метр дистанцие 11.02 çеккунтра парăнтарнăскер Шупашкарта 200 метр чупĕ. Ричард Килти, Роберт Грабарз, Эндрю Осаджи, Джоди Уильямс та команда чысне ÿстереççĕ.

Итали те хăйĕн пултаруллă ывăл-хĕрĕпе чемпионсемпе тупăшма тивĕç. Чи маттуррисен йышне кĕреймест пулин те Суперлигăра улттăмĕш çул тытăнса тăрать вăл. Çÿллĕшне сикекен Алессия Трост Мария Кучинăпа тивĕçлипех тупăшма пултарать. 38 çулти Фабрицио Донато вара Шупашкарти чемпионата хутшăнакан спортсменсенчен чи аслисенчен пĕри.

Норвеги те Суперлигăна таврăннă çĕршывсен йышĕнче. Ку çĕршыв командин хальхи йышĕнчен уйрăмах Джайсум Сайде Ндурене, Каролина Бьеркеле Гровдальене, Владимир Вукичевиче, Тонье Ангельсена палăртмалла.

Польша та пьедестал çине хăпарма тивĕçлисен йышĕнче. Пĕлтĕр виççĕмĕш вырăна тухма вĕсене икĕ очко çеç çитмен. Команда сумне Анита Влодарчикпе пĕрлех Роберт Урбанек, Юстина Каспржичка ÿстереççĕ. 17 çулти Ева Свободăна та палăртмасăр иртеймĕн.

Испани юлашки виçĕ çулта çăмăл атлетика командисен Европа чемпионатĕнче саккăрмĕш вырăн йышăнса пынă. Вăйлă спортсменсем пуррине пăхмасăр унран çÿлерех хăпарма май килмен-ха.

Украина команди юлашки икĕ çулта улттăмĕш кăтартупа палăрать. Командăри спорт çăлтăрĕсен йышне, вĕсен пахалăхне хакласан, вĕсем кăçал пысăк çитĕнÿ тума пултарĕç. Спортсменсенчен Ольга Саладухăна, Анна Мищенкона, Александр Пятницăна, Кристина Гришутинăна палăртмалла.

Швеци командин лидерĕ – Абеба Арегави. Çавăн пекех Сюзанна Каллура, Ангелика Бенгтссона та палăртмалла.

Мĕнех, пъедесталăн чи çÿллĕ картлашкисене Шупашкарта кам йышăнĕ – кĕçех паллă пулĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**




АНАТАЛЛА-ТĂВАЛЛА

# Ку тăрăхра Максăмсем татах та çуралĕç-ха

**Машинăпа вĕçтерсе пынă май нумай-нумай çул тӳпенелле кармашакан симĕс хырсем, анлă та сарлака уйхир, çерем çинче ирĕклĕн çӳрекен лашасемпе пĕчĕк тихасем чӳречерен мĕлтлетсе юлаççĕ. Тĕлĕнмелле илемлĕ Шăмăршă тăрăхĕ! Йĕри-тавра – вĕçĕ-хĕррисĕр вăрман, уçланкăсем... Тин çеç çулнă çаран утти шăрши сăмсана кăтăклать. Сывлăшĕ те урăхла кунта, ытти çĕртинчен чылай тасарах та уçăрах. Çул хĕрринчи илĕртӳллĕ çупкăм-çупкăм хурăн çырлине эпир те тутанса пăхмасăр чăтаймарăмăр. Çĕр айĕнчен тапса тухакан сиплĕ çăлкуç шывне тăраниччenех ĕçсе ăш хыпнине ирттертĕмĕр. Ĕмĕрхи вăрмансем хӳтлĕх параççĕ-и, шăрăхра та хĕвелĕ ытлашши пĕçертмест кунта. Акă ăçта иккен вăл чăн-чăн ырлăх тĕнчи!**



Анат Чаткас Шăмăршăран вунсакăр çухрăмра вырнаçнă. Хĕвелтухăç енчен Тутарстанри Пăва, хĕвеланăç енчен Çĕпрел районĕсемпе чикĕленекенскер тутарсен хушшине хĕсĕнсех ларнă. Ирĕклĕн кĕтӳ çӳретмелĕх, утă çулмалăх та вырăн юлман кунта. Вăхăтĕнче темĕнле хĕн-хур, выçлăх, асап чăтнă пулин те Чаткассем парăнман. Туслăхпа килĕшӳ, чунпа çирĕп те чăтăмлă пулни, йывăрлăхра пуç усманни кунти халăха вăйран ӳкме паман.

Паянхи 200 ытла киллĕ Анат Чаткасра шкул, ача сачĕ, пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕ, 300 вырăнлăх культура çурчĕ, библиотека, лавккасем, «Восход» ялхуçалăх кооперативĕ, Хăватсем тăвакан çветтуй Николай чиркĕвĕ вырнаçнă.

### Нумай ачаллă çемье

Шăрăх çанталăкра урамри хăйăр купи çинче машинăпа вылякан шăпăрлансем патĕнчен лăпкăн иртсе каяймарăмăр. Чăвашла калама çук хитре чĕвĕлтетекен арçын ачасем никама асăрхамасăр пĕр-пĕринпе ăмăртсах йывăр тиевлĕ тракторсене малалла шутаратчĕç. Шыв кӳлленчĕкĕнче хăйăра йĕпетнĕ те çурт ăсталама пикеннĕ шăпăрлансем. Ан тив, пит-куçĕ таранах хуралса пĕтнĕ пулин те /амăшĕ çуса тасатĕ-ха/ питĕ ĕçлĕччĕ вĕсем. Уçă сывлăшра выляни компьютер умĕнче пăчăхса ларнинчен темиçе хут лайăхрах-çке. Пилĕк çулти сарă çӳçлĕ Лева ӳссен никам та мар, тракторист пулма ĕмĕтленет. Часах унăн амăшĕ Татьяна та, самантлăха ĕçрен килне чупса килнĕскер, урама тухрĕ.

Юнкеровсем пилĕк ача çитĕнтереççĕ. Чи асли Кристина Шупашкарти ялхуçалăх академийĕн 3-мĕш курсĕнче вĕренет. Дима кăçал 11-мĕш класс пĕтернĕ. Вадим 4-мĕшне, Алеша 2-мĕш класа куçнă. Хăйăр купи çинче выляма юратакан, пирĕнпе пуринчен малтан паллашма ĕлкĕрнĕ Лева ача садне çӳрет.

Юнкеровсем «Нумай ачаллă çемьесене çурт-йĕр тума пулăшасси» социаллă программăпа килĕшӳллĕн Анат Чаткасра пысăк пӳрт çавăрнă. Унта хальлĕхе никам та пурăнмасть. Хăйсен вăйĕпе маларах хăпартнă çуртрах пурин валли те вырăн çитет. Амăшĕн капиталĕпе усă курма ĕлкĕреймен-ха çемье. «Ачасене вĕрентме кирлĕ пулĕ. Çавănпа ăна хальлĕхе тытас темерĕмĕр. Тăвату ывăла ура çине тăратмалла-çке. Пурте ялта юлас темĕç», – чунне уçать Татьяна. Вăл чылайранпа Анат Чаткасри çемье врачĕн офисĕнче тăрăшать. Ĕçри çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн вăл çак кунсенче «ЧР сывлăх сыхлавĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Мăшăрĕ Андрей – фермер. 131 гектар çĕр çинче çĕрулми, чĕкĕнтĕр, кишĕр, утă, тырпул туса илет çемье. Техника енчен пĕр чăрмав та çук Юнкеровсен. Кил хуçи çĕр ĕçне юратни юнпа çыхăннă тесен те йăнăш мар пулĕ. Ашшĕ Анатолий Александрович ĕмĕр тăршшĕпех колхозра механизаторта ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă. Ывăлĕсене утма тытăнсанах хăйĕнчен хăварман ашшĕ. Пĕчĕккĕллех техникăна хăнăхтарнă, çĕрпе тухăçлă усă курма вĕрентнĕ. Андрейĕн тетĕшĕ Юрий те – фермер.

«Хĕрарăм телейĕ арçынран нумай килет. Пĕр-пĕрне çур сăмахран ăнлансан кăна çирĕп çемье çавăрма, ачасене тĕрĕс-тĕкел ӳстерме пулать. Ирхине ĕçе тухса каятăп та каçхине кăна таврăнатăп. Çĕрле те, уявсенче те чирлĕ çынна пĕрремĕш пулăшу пама чупасси пĕрре мар пулнă. Мăшăр мана çунатлантарса, хавхалантарса пырать», – çемье пурнăçĕ пирки ăшшăн каласа кăтартать Татьяна Васильевна.

### Утрав çинчи ял

Анат Чаткас ял тăрăхне кĕрекен Максим Горький поселокĕ пĕчĕк утрав çинче вырнаçнă темелле. Ун йĕри-тавра та – йăлтах тутар çĕрĕ. Ял çыннисем каласа кăтартнă тăрăх, кунта вĕсем Патăрьел районĕнчи Шăнкăртам çумĕнчи пĕр пĕчĕк ялтан куçса ларнă, вăрман çывăхнелле хӳтлĕх шыраса килнĕ. Çĕрĕ хĕсĕккине пăхмасăр çак пĕчĕк лаптăк çинче тĕпленме тĕв тунă чăвашсем. Ку тăрăха пуринчен малтан куçса килекенни Максăм ятлă пулнă.

/Вĕçĕ 6-7-мĕш стр./.

ХАСТАРРИСЕМ

# Тупăш та, киленӳ те кӳрет

Елчĕк тăрăхĕнчи Кĕçĕн Таяпара ӳркенмен, ĕçшĕн çунакан Ивановсен витере йыш хушăнсах тăрать. Тенкĕ çумне пус хушма пĕлеççĕ вĕсем. Тивĕçлĕ канăва тухнине пăхмасăрах ултă ĕне таран усрать çемье паян. Вăкăрсемпе пăрусем те – картиш тулли. Сурăхĕсем те сахал мар. Вунсаккăрăшĕ хăй – пĕр кĕтӳ. Ĕçрен хăраманнисен, мал ĕмĕтпе пурăнакансен, чăн та, ларса канма та вăхăт çук.

Ивановсем хуçалăха çирĕп алра тытса тăни кашни утăмрах сисĕнет. Кирек ăçталла куç ывăтсан та тасалăхпа тирпейлĕх хуçаланнине асăрхарăм. Выльăх-чĕрлĕх йышлă тытаççĕ пулсассăн та картишре çӳпĕ выртнине те кураймăн. Кашни япала хăй вырăнĕнче.

– Ĕне сăвассинчен хăрамастăп, нимле йывăрлăх та туймастăп. Çак ĕç мана киленӳ кăна кӳрет. Урăх тата мĕн тумалла пирĕн? Ахаль ларма хăнăхман, – ăнлантарать кил хуçи арăмĕ.

Юрий Арсентьевичпа Эльвира Анатольевна ветеринара вĕренмен пулин те выльăх чирĕсем çинчен йăлт пĕлеççĕ. Эмел те алă айĕнчех вĕсен. Пĕрремĕш хут пăрулакан ĕнене те, чирлĕ выльăха та хăйсемех пулăшу параççĕ.

Тăват-пилĕк сехетре ура çине тăрсан та çĕрлеччен ĕç пĕтмест ял çыннин. Сĕт пуçтарма киличченех, тĕслĕхрен, выльăх-чĕрлĕхе апатлантарма та, витене тасатма та ĕлкĕреççĕ вĕсем.

– Вăйпиттисен выльăх-чĕрлĕх ытларах усрамалла. Ялта вăхăта тата урăх мĕнле ирттермелле? Ĕçлесен çын çамрăк курăнать, – çирĕплетет Эльвира Анатольевна.

Эльвира Иванова 36 çул кĕçĕн классене вĕрентнĕ. Канашри педагогика колледжĕ хыççăн тăван тăрăхах таврăнас тенĕ вăл. Малтан Таяпа Энтринче кĕçĕннисене пĕлӳ панă, кайран Кĕçĕн Таяпана куçнă. «Шкултан кайсан калама çук хĕн пулчĕ. Ялан çын хушшинче пулма хăнăхнăран питĕ йывăрччĕ. Пĕчĕккисемшĕн тунсăхлаттăм. Пирĕн йăх-несĕлĕн учитель династийĕ темиçе çула тăсăлать. Атте те шкул директорĕнче чылай çул ĕçлерĕ. Асаттепе асанне те, асаннен аппăшĕ те вĕрентекенсем пулнă», – каласа кăтартать Эльвира Анатольевна.

Ывăлĕ Саша та амăшĕн çулĕпех каяс тенĕ. И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн химифакультетĕнче ăс пухнă. Анчах та педагог профессине алла илнĕскер шкула каяс темен. Александр халь Мускавра химик-экспертра тăрăшать. Хĕрĕ Надежда Мускавра технолог-кондитерта ĕçлет.

5 гектар ытла çĕр çинче утă, пахчаçимĕç çитĕнтереççĕ Ивановсем. Техника енчен пĕр чăрмав та çук вĕсен, çавăнпа та ĕçĕ кал-кал пулса пырать. Трактор та, çăмăл машина та, УАЗик те туяннă тăрăшуллă кил хуçи. Пахча тулли – çулла та, кĕркунне те хĕп-хĕрлĕ ларакан çĕр çырли. Иçĕм çырли те тухăçлăхĕпе кашни çулах савăнтарать.

Хĕл хырăмĕ аслă. Картиш тулли выльăх валли апачĕ те нумай кирлĕ. Çуллахи вăхăтра канма пĕлмесĕр капанĕ-капанĕпе утă хатĕрлеççĕ вĕсем.

Пĕр-пĕрне çур сăмахран ăнланса, килĕштерсе пурăнаççĕ Юрий Арсентьевичпа Эльвира Анатольевна. Пӳртре таса та хăтлă. Выльăх пăхасси те юратнă ĕç кăна вĕсемшĕн.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.



**Хаклă тăванăм, вулаканăм!**

Аса илтеретпĕр – **«Чăваш хĕрарăмне»** утă /июль/ уйăхĕн 1-мĕшĕнчен илсе тăмашкăн çырăнтарас тапхăр вĕçленсе пырать: **5 кун çеç юлчĕ.** Почтальонпа тĕлпулма ĕлкĕреймен тĕк –васкăр. Хаçатăн çитес çурçуллăхри хакĕ: **360,66 тенкĕ.**

"Чăваш хĕрарăмне" редакцие килсе илмелле те çырăнма пулать. Капла майпа укçа-тенкĕ те перекетленĕ.

ХӲТЛĔХ



# Хунав çирĕп ӳстĕр

**Чăваш Республикинче Ачасен правине хӳтĕлекен уполномоченнăй должноçне 2012 çулта саккунпа килĕшӳллĕн йĕркеленĕ. Çак ыйтусемпе ĕçлемешкĕн Вячеслав Рафинова шаннă. Асăннă йĕркелӳ çултан çул вăй илсе пынине палăртмалла. Пулăшу ыйтма та, канашлама та килеççĕ кунта çынсем. Çавăн пекех уполномоченнăй хăй те вырăна тăтăшах тухса çӳрет. Влаçăн тĕрлĕ юппипе тачă çыхăнса ĕçлени кăткăс нумай ыйтăва татса пама пулăшать.**

Çакна тĕслĕхсемпе те çирĕплетме пулать. Калăпăр, йĕркеленнĕ хыççăнах кунта пулăшу ыйтма 536 çын килнĕ, пĕлтĕр вара – 718. Вĕсен пысăк пайĕ – 71, 4% – ашшĕ-амăшĕ. Пирĕн тăрăхра аслисем пепкисемшĕн тăрăшнине çирĕплетекен кăтарту ку. Çав вăхăтрах хăйсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй патне пулăшу ыйтма 5 ача пынă тата аслисен хӳтлĕхĕсĕр тăрса юлнисем – 39-ăн.

Ӳсекен ăрăва воспитани парас ыйтупа уполномоченнăй патне тăтăшах çитеççĕ, нумай чухне – ашшĕ-амăшĕ. Ыйтусене тишкерсен çакă уççăн курăнать – яланхи пекех, вĕсене вырăнтах татса пама май пулнă. Анчах та вĕренӳ учрежденийĕсенче ĕçлекенсем тата вĕсен ертӳçисем халăха ăнлантарас тесе çителĕклĕ тăрăшмаççĕ. Сăлтавĕ те çавă кăна. Пачах тепĕр май, тепĕр чухне ертӳçĕсем пулăшма мар, ура хума хăтланни те тĕл пулать. *Шкулта вĕренекен И. йĕлтĕрпе чупас енĕпе ăмăртусене тăтăшах хутшăннă. Ашшĕне, хăйĕн тренерне, лайăх кăтартусемпе савăнтарнă. Анчах та ăмăртусенчен пĕринче хĕрачана сăлтавсăрах кӳрентернĕ – çĕнтерӳшĕн хавхалантарма "маннă". Ашшĕ тĕрлĕ инстанцие çитни те лару-тăрăва уçăмлатма пулăшман. Ачасен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй çак ыйтупа кăсăкланма пуçласан кăна хĕрачана савăнăçлă лару-тăрура дипломпа, медальпе тата ятарлă парнепе чысланă.*

Паллах, чиновниксен кирек мĕнле ыйтăва та вăхăтра тата саккунра палăртнă пек татса памалла. Шел те, нумай чухне пăсăлать çак йĕрке. *Енчен те республикăра çак должноçе йĕркелемен тĕк, калăпăр, Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан хĕрарăма, виçĕ ачине, иккĕшĕ вĕсенчен сусăр, пĕччен ӳстерекенскере, кам пулăшĕччĕ? Улттăри хĕрачасем хăйсем тĕллĕн утма мар, ларайманççĕ те, калаçайманççĕ те. Çемье 10 хутлă çуртра хваттер тара илсе пурăнать. Вĕсене хваттерпе черетсĕр тивĕçтерессипирки суд йышăнăвĕ те пур, анчах та вăл пурнăçланмасть. Уполномоченнăй лару-тăрупа вырăна тухса паллашнă, хута кĕнĕ хыççăн кăна 2 пӳлĕмлĕ хăтлă хваттере куçма пултарнă вĕсем.* Уполномоченнăй историйĕ республикăра хальлĕхе вăрăм мар пулин те кун пек тĕслĕх çинеçинех илсе кăтартма пулать.

Юрату авăрĕнчи чулсене те пуçтарма тивет унăн. Ара, вăхăтĕнче пĕрпĕрне савсах пĕрлешетпĕр, çемье карапĕ сивĕ чулсене пырса çапăннине вара нумайăшĕ чăтаймасть. Çапла хĕрарăм пĕр еннелле, арçын тепĕр еннелле çавăрать туртана. Ачан вара ăçта кайса кĕмелле? Хăш çыранта юлмалла? Пушшех те, пĕрлехи пурлăха экс-мăшăр хушшинче çурмалла пайлать суд. Ачана шута илмест. Хальхи вăхăтра регионсенчи уполномоченнăйсем мăшăрсенчен пĕрне, ачапа юлаканнине, пурлăхăн пысăкрах пайне уйăрма сĕнсе РФ Патшалăх Думине ыйтупа тухнă. Çынсем чунсăрланса пынă вăхăтра пепкесен правине саккун шайĕнче хӳтĕлемеллех. *Шупашкарти Ленин район сучĕ нумаях пулмасть арăмĕпе упăшкине уйăрнă. Ачисем амăшĕпе юлнă. Анчах та 1998 çулта çут тĕнчене килни сусăр пулнă, ăна яланах тимлĕх кирлĕ, унсăр пуçне – хаклă эмелсем. Суд пурлăха мĕнле пайланипе арçыннăн пĕр кредиторĕ килĕшмен, вăл уйрăм майпа ЧР Аслă Судне ыйтупа тухнă. Енчен те унăн ыйтăвне тивĕçтернĕ тĕк ачасем... урамра тăрса юлма пултарнă. Уполномоченнăй çак ĕçе тĕплĕ тишкерме, ачасен прависене хӳтĕлеме ыйтнă. Телее, тĕллеве пурнăçлама май килнĕ.*

*Тăлăх шăпи мăянран та йӳçĕ теççĕ. Аслисен хӳтлĕхĕсĕр тăрса юлнă ачасен ыйтăвĕсемпе уйрăмах çине тăрса ĕçлет уполномоченнăй. Красноармейски районĕнче тĕлпулу йĕркеленĕ май 14 çулти хĕрача пулăшу ыйтнă. Амăшĕ вилнĕ унăн, ашшĕне вара пепки мĕнле пурăнни пачах та кăсăклантарман. Çав вăхăтрах хваттершĕн тата коммуналлă пулăшушăн парăм ӳссех пынă... Хĕрача мĕн тумаллине те пĕлмен. Ара, тупăш çăлкуçĕ çукçке унăн. Уполномоченнăй тĕрлĕ инстанцирен пулăшу ыйтма сĕннĕ. Чун ыратăвне ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Н.Угаслов илтнĕ, хĕрачана парăмсемпе татăлмашкăн 50 пин тенкĕ парса пулăшнă. Хӳтлĕхсĕр юлнăскере аппăшĕ хăйĕн хӳттине илнĕ, тăрантаракана çухатнăшăн пособи илмелле тунă.*

Çапах та чи хакли – çын пурнăçĕ. Пепке çут тĕнчене чирлĕ килсен нимĕн те тăваймăн. Анчах та сывă çуралнă ачана çухатни чуна ытла та ыраттарать. Пĕлтĕр çакăн пек 83 тĕслĕх пулса иртнĕ, 21 пепке çулталăка та çитеймесĕрех пурнăçран уйрăлнă. Шăпăрлансем нумай чухне аслисем çителĕклĕ тимлĕх уйăрманнипе куç хупаççĕ. Ку енĕпе Вăрнар, Патăрьел, Йĕпреç, Комсомольски, Красноармейски, Çĕрпӳ, Шупашкар, Канаш, Çĕмĕрле районĕсем, Канаш тата Çĕнĕ Шупашкар хулисем палăрнă. Ăшă çу кунĕсем çемьесене инкек илсе килеççĕ. Чӳречесене уçнă май аслисем ачисене тимлĕх ытларах кирли пирки манаççĕ курăнать. 2013 çулта шăпăрлансем 23 хутчен уçă чӳречерен тухса ӳкнĕ /вĕсенчен иккĕшĕ вилмеллех аманнă/, иртнĕ çул вара çак кăтарту темшĕн тăрук ӳссе кайнă – 36 /виççĕшĕ вилнĕ/.

Пушар никама та шеллемест. Тимлĕхсĕр хăварнă ачасем пушшех шар кураççĕ. Пĕлтĕр çапла пушар хăрушсăрлăхне пăхăнманни пирки Патăрьел районĕнче 2010, 2011 çулсенче çуралнă ачасен пурнăçĕсем татăлнă. Çак сăлтава пулах Канаш районĕнче 2010, 2011, 2012 çулсенче кун çути курнă пепкесем çăлăнайман. Эрех-сăра виçине пĕлмен амăшĕ те пушартан тухайман. Кăçал хурлăхлă çак список малалла тăсăлнă – Етĕрне районĕнче икĕ шăпăрлан кун-çулĕ татăлнă.

Шывра та, çул çинчи инкексене пула та савăнса та курмасăрах куçĕсене хупаççĕ ачасем. Çула çитмен çамрăксемпе пĕчĕк шăпăрлансем пурнăçран хăйсен ирĕкĕпех кайни вара чуна вырнаçмасть. ЮНЕСКО кăтартăвĕсем тăрăх, çамрăксем хăйсем çине алă хурасси Европа çĕршывĕсенче 100 пин çын пуçне 0,4-1,5 тĕслĕхпе танлашать. Раççейре ку кăтарту 2,8 хут пысăкрах. Чăваш Енре те пулса иртеççĕ кун пек тĕслĕхсем. 2014 çулта 51 тĕслĕхе шута илнĕ, вĕсенчен 12-шĕнче палăртнине пурнăçланă... Кăçалхи 4 уйăхра Шупашкар хулинче, Вăрмар, Муркаш, Вăрнар районĕсенче çакăн йышши инкек пулса иртнĕ. Инкеке сирес тесе республикăра нумай ĕç пурнăçлаççĕ, ятарлă больницăсенче çак ыйтупа ĕçлекен пӳлĕмсем уçнă. Çапах та та Чăваш Республикинче ку енĕпе ĕçлекен специалистсем çитмеççĕ-ха.

Çакă тата ытти ыйтусене вăхăтра татса памашкăн республикăра талăкĕпе ĕçлекен ачасен **"Шанчăк телефонне"** йĕркеленĕ. Унăн номерĕ: **8-800-2000-122.** Унта тӳлевсĕрех тата кирек кам та шăнкăравлама пултарать. 2014 çулта 24,5 пин шăнкăрав йышăннă. Шăнкăравлакансенчен 69,1% – ачасемпе çула çитмен çамрăксем.

Пурнăçра, шел те, ыррипе пĕрлех усалли те аталанать. Ачасем йăлтах аслисенчен курса-вĕренсе ӳсеççĕ. Телее, юлашки çулсенче республикăра çула çитмен çамрăксем саккуна пăсасси чакнă. Ӳсекен ăру нумай чухне çапăçас тата ют пурлăха çаратас енĕпе палăрать. Чан çапмалли тепĕр сăлтав – йĕркене нумайăшĕ пуçĕсем минренĕ самантра пăсать. Çамрăксене наркотиксенчен сыхласа хăварасси паян чи çивĕч ыйтусенчен пĕрне çаврăнчĕ. Республикăри наркодиспансерта 2014 çулта наркотикпе туслă 3229 çынна шута илнĕ /вĕсенчен пысăк пайĕ – аслисем/. Çав вăхăтрах 2013-2014 çулсенче çак шутра çамрăксен йышĕ питĕ хăвăрт ӳснине палăртмалла. Çак инкеке право, йĕрке хуралĕн ĕçченĕсем тăрăшнипе сирме май килмĕ. Çăлăнăç утравĕ – çемьере. Сывăх çынсен юратăвĕ, ăнланăвĕ, чун ăшши кирек мĕнле йывăрлăха та парăнтарма пулăшĕ. Çакна асран кăларас марччĕ аслисен. Çирĕпленсе çитеймен хунав пĕрре авăнсах ан хуçăлтăрччĕ, çирĕп тымар ярса вăйлă çил-тăвăла та парăнмасăр аталанма хăнăхтăрччĕ.

**Республикăри Ача прависен уполномоченнăйĕн материалĕсемпе усă курса хатĕрленĕ.**

ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШĂВĔ

# Çурт хăпартасси – шалча лартасси мар

**Ял çĕнелсе илемленнине сăнама кăмăллă. Етĕрне районĕнчи Килтĕшри капмар çуртсем аякранах курăнаççĕ. Акă, тĕслĕхрен, Шкул урамĕнчи Петровсем, Скобелевсем, Смородиновсем, Васильевсем... ял тăрăхне аталанма пулăшакан программăпа усă курса çĕнĕ пӳрте кĕнĕ. Юлашки 10 çулта Килтĕшри, Йӳçпанти, Урташри, Исментерти 13 çемьене çак тĕллевпе федераци, республика, вырăнти хыснаран укçа уйăрса панă. Халĕ черетре – улттăн. Вĕсем те патшалăх пулăшасса кĕтеççĕ.**



**Çĕнĕ çул парни**

Кăçалхи çулталăк Васильевсемшĕн нихçанхинчен савăнăçлă пуçланнă. Шăпах кăрлач уйăхĕн пуçламăшĕнче çурт хăпартма паракан субсидие алла илнĕ вĕсем.

Пĕчĕклех ашшĕсĕр юлнă Анатолий Александрович тăвăр пӳртре çитĕннине лайăх ас тăвать. 5-ĕн пурăннă вĕсем. Халĕ 100-е яхăн тăваткал метр лаптăкра кашнинех хăйне ятăн пӳлĕм пур. Пурăнмалли условисене лайăхлатма тахçанах ĕмĕтленнине пытармаççĕ Васильевсем.

Ашшĕпе амăшĕн тĕрекĕ Артур – çар хĕсметĕнче, Алиса 7-мĕш класс пĕтерне. Нумаях пулмасть яш ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕн Николай Маловăн ятарлă стипендине тивĕçнĕ. Хĕр дзюдо, самбо енĕпе шкул, район, республика шайĕнче палăрнă. 2-мĕш класрах спортăн çак тĕсне суйласа илнĕскер вун-вун ăмăртăва хутшăннине медальсем çирĕплетеççĕ.

Анатолий Александрович юлташĕн йăмăкне Елена Дмитриевнăна пĕрре курсах килĕштернĕ. Хăйĕнчен кĕçĕнрех Муркаш хĕрĕпе çыхăнăва татман. Тăвансене туй кĕрекине пуçтарнăранпа 22 çул иртнĕ ĕнтĕ.

Çемье пуçĕ чылай çул ял хуçалăхĕнче водительте ĕçленĕ, кил хуçи арăмĕ поварта та, дояркăра та тăрăшнă, кайран сутуçа вырнаçнă. Елена Дмитриевна тутлă торт пĕçерме пĕлнипе ырă ят çĕнсе илнĕ. Усă кăмăлĕшĕн те юратать ăна ял-йыш.

«Урамра çынпа калаçмасăр иртсе каяймастăп. Сăмах хушмасан хама мăнна хунă пек, пĕлĕшсене хисеплемен пек туйăнать. Иртен-çӳрене сывлăх сунмасан чунра лăпкă мар», – тет Елена Дмитриевна.

**Пĕрлехи вăйпа**

Тахçанхи пĕлĕшĕн Алексей Смородиновăн килте ларма вăхăт пур-и? Вăл тракторпа хире тухнăччĕ. Мăшăрĕ çĕрулми суйлама кайнă терĕç.

Мана Анатолий Александрович хăйĕн машинипе туххăмрах уя çитерчĕ. Пире курсан трактористсем сывлăш çавăрса илме кабинăран тухрĕç.

«Çулталăкрах пӳрт çĕклерĕмĕр, тăррине витрĕмĕр. Тăвансем, юлташсем нумай пулăшрĕç», – каласа кăтартать Алексей Филиппович. Килĕнче çывăрмалли 2 пӳлĕм те, зал та, кухня та пысăк. Кил хуçи калашле, вĕсем хăна пăхма юратаççĕ. Смородиновсен икĕ енчен те тăван нумай.

Картиш тулли выльăх усрать ĕçчен çак çемье. Виçĕ ĕне сĕтне сутни енчĕке хулăнлатма пулăшать вĕсене.

**Сăмах май, 2014 çулта республикăри 231 çемьене ял тăрăхĕнче çурт хăпартма е илме укçа уйăрни çинчен свидетельство панă. Çавна май 7916 тăваткал метр пурăнмалли лаптăк хута янă. Çак пулăшу ял таврашĕнче пурăнмалли условисене лайăхлатас тĕлĕшпе чи витĕмли шутланать. Кăçал «2014-2017 çулсенче тата 2020 çулччен ял тăрăхне çирĕп аталантарасси» программăпа 179 çемьене субсиди пама палăртнă.**

Асăннă программа инфротытăма аталантарма та май парать. Фельдшерпа акушер пункчĕ тата пĕтĕмĕшле практика тухтăрĕн офисне уçас енĕпе, сăмахран, Чăваш Республики Раççейри чи лайăх сакăр регион йышне кĕнĕ. Пĕлтĕр республикăра фельдшерпа акушер 40 пункчĕ уçăлнă, çав шутран саккăрăшне федераци субсидийĕпе усă курса çĕкленĕ. Çакă планпа пăхнинчен 5 хут ытларах. Çавнашкалах çак укçана шыв, газ, электроэнерги кĕртме уйăраççĕ. Унсăр пуçне уйрăм çынсем хăйсен ĕмĕттĕллевне пурнăçлама грант пулăшăвĕпе усă курма пултараççĕ. Шупашкар районĕнчи Кӳкеçри «Бичурин сачĕ музейпе парк комплексне» тата Етĕрне районĕнчи Мăн Шемертенри «Чăваш хресченĕн хуçалăхĕн музейне» шăпах çак укçапа йĕркеленĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕсем.



# Ку тăрăхра Максăмсем татах та çуралĕç-ха

**/Вĕçĕ. Пуçл. 5-мĕш стр./.**

Ял ятне унпа çыхăнтарса «Максим Горький» тенĕ-мĕн. Пĕр çемьери пек, пĕр çăвартан пурăннă теççĕ вĕсем пирки. Пĕр урамлă ялта 11 кил пулнă, вĕсен шучĕ паянхи кун та палăрмаллах чакман. Çулла 8 çуртра çутă çунать, хĕл кунĕсенче 6-шĕнче пурăнаççĕ. Çамрăксем ашшĕ-амăшĕн вырăнне пăрахманни, çурчĕсене сутманни савăнтарать.

Ял хĕрринчи Петр Алексеевичпа Зоя Петровна йăмра айĕнчи каска çинче хур чĕпписем сыхласа ларатчĕç. Вĕсем пĕрпĕринпе 57 çул килĕштерсе пурăнаççĕ. Хăйĕнчен виçĕ çул аслăрах хĕре Петĕр Елчĕк тăрăхĕнчи Яманчӳрелĕнчен вăрласа килнĕ. Чипер Зойăна тăванĕсем патне кайсан куç хӳрипе пĕрре çеç курнă каччă.



«Вунсакăр çулта çеçчĕ ун чухне, авланас шухăш та, юрату туйăмĕ те пулман пуçра, тăлăх йăмăк-шăллăма пăхакан кирлĕччĕ те хĕре лаша çуни çине хутăм та килтĕм», – çамрăк чухнехине аса илет Петр Алексеевич. Каялла пăрахса каяс шухăш пулман-и тесен Зоя аппана: «Эй, ăçта ĕнтĕ, ялта тӳрех ят каять, ун хыççăн ан та пурăн вара, юрату мĕн иккенне пĕлмесĕрех арăм пулса тăнă. Хальхи мар çав ун чухне, хĕрсем япала вырăнĕнче анчах пулнă, тытнă та вăрласа кайнă. Пачах килĕштермесен те чăтса пурăнма тивнĕ. Уйрăлса каяканни пит сайра пулнă ун чухне», – каласа кăтартать Зоя Петровна.

Зоя качча тухнă-тухманах тăватă ачаллă пулса тăнă çапла. Пĕрремĕш кунранах ун çине купи-купипе ĕç, тĕлĕнмелле пысăк яваплăх тиеннĕ. Петĕр ашшĕпе амăшĕ çамрăклах çĕре кĕнĕ хыççăн шăпăрлансем тăлăха юлнă. «Хальхи пек чап-чап уйăхĕ пулман пирĕн, упăшка çумĕнче ачашланса та ларман. Филимон вунпĕртеччĕ, Ванюк тăваттăраччĕ, Ольăпа Толя 2,5 çултаччĕ. Пĕчĕкскерсем пĕрмай вар-хырăм чирĕпе аптратчĕç. Çунă-тасатнă, апат пĕçернĕ, çав вăхăтрах колхоз ĕçĕнчен те юлман. Юмахри Кĕлпикерен нимпе те кая пулман», – качча килнĕ кунсене куçĕ умне кăларать Зоя Петровна.

Вăрçă çулĕсенче мĕнле асапланнисене, çăкăр та çисе курман кунсене, иртен пуçласа каçчен хирте тырă вырнине, аякка чул кăларма кайнине, Яманчӳрелĕнче çул сарнине те аса илчĕ ĕмĕр-ĕмĕр ĕçпе пиçĕхнĕ ăш пиллĕ кинеми.

Петр Алексеевичпа Зоя Петровна хăйсем тепĕр тăватă ача çуратса çитĕнтернĕ. Шел те, тăлăхсенчен пĕри, Филимон, сарăмсăр вилнĕ. Тăван мар ывăлĕшĕн те чунĕ ыратать Зоя Петровнăн. «Ыттисем пурте лайăх пурăнаççĕ, хваттерлĕ, ача-пăчаллă, таса-сывă, урăх тата мĕн кирлĕ? Эпир вĕсене пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарнă. Йышлă çемьере пĕри те алă усса ларайман. Хĕрсем, уйрăмах Таня, ашшĕпе пĕрле çăвĕпех хиртеччĕ, комбайнер пулăшуçинче çӳретчĕç. Кĕркунне кĕлете тырпул çителĕклех кĕретчĕ. Çăкăр хакне пĕлсе ӳснĕ пирĕн ачасем. Аякра темеççĕ, час-часах килсе çӳреççĕ, пире кашнинчех савăнтарса хăвараççĕ. Чун хĕпĕртет тĕпренчĕксемшĕн. Ывăлпа кин çумĕнче лăпкă та лайăх ватлăхра. Юрать, пире пăрахмарĕç, ялтах юлас терĕç. Пĕр-пĕринпе тату, килĕштерсе, ырлăх курса пурăнатпăр. Кинĕм те хамашкалах, малтанхи кунранах пĕр чĕлхе тупрăмăр», – сăмах çăмхине сӳтет те сӳтет Зоя аппа.

**Пĕр вăрттăнлăх та çук**

Юрий Николаевичпа Ирина Николаевна Ивановсем ачисене çитĕнтернĕ хыççăн тепĕр 16 çултан ватлăхра хăйсене йăпанма тесе тĕпкĕч ывăл çуратнă. Димăпа Алексей Чĕмпĕрти политехника институтĕнче пĕлӳ пухаççĕ. 4 çулти Максима кашни кунах Анат Чаткасри ача садне илсе çӳреççĕ. Асли çут тĕнчене килсен Шăмăршăри ача çуратмалли çуртри акушеркăсем: «Максим Горький ялĕнче Максим çуралчĕ», – тенине ăша хывнă Ирина. Амăшĕ çак ятах суйласа илнĕ тĕпренчĕкĕ валли, анчах та тăванĕсем Дима ят хуртарнă. Иккĕмĕшне те Шăмăршăрах çуратнă. Акушеркăсем хальхинче те çав ятах хуртарас шухăшпа малтанхи пекех каланă. Максим тесе çыртарма пуçтарăннăскерсене Иринăн амăшĕ: «Пепке Турă çынни Алексей эрнинче çуралнă, çавăнпа та унăн ятне хумалла», – тенĕ хистесех. Ват çын каланине итленĕ çамрăксем. Виççĕмĕшĕ Шăмăршăра мар, Шупашкарта çут тĕнчене килнĕ. Ирина Максим Горький ялĕнчен çуратма килнине никам та пĕлмен кунта. Тăванĕсемпе ашшĕ-амăшĕ хушшинче те тавлашу пулман. Хальхинче ывăлне пĕр шухăшласа тăмасăр Максим ят çыртарнă Юрăпа Ирина Ивановсем.



«Ялти виççĕмĕш Максим» теççĕ тăватă çулти шăпăрлан пирки. Шăнкăртам çывăхĕнчен чи малтан куçса килекенни Пименов хушаматлă пулнă-мĕн. Ял çыннисем калană тăрăх, пĕр вăхăт Максим ятлă тепĕр çын /иккĕмĕшĕ/ пурăннă кунта.

Тĕлĕнмелле хитре çурт-йĕр çавăрнă Ивановсем. Ашшĕпе амăшне хисеплесе хăй çуралса ӳснĕ пӳрте пăсас темен кил хуçи. Асăнмалăх юлтăр тесе ăна та йăлтах çĕнĕрен юсаса çĕнетнĕ. Çуллахи вăхăтра ывăлĕсем пурăнма юратаççĕ-мĕн унта.

«Калама çук туслă эпир, Максим Горькисем. Уявсенче те, нимере те, хуйхă-суйхăра та пĕрле. Никамран пĕр вăрттăнлăх çук, çавăнпах килсенче кам мĕн çинине те, кукăль пĕçернине те, аншарли юхтарнине те пĕлсе тăратпăр. Çыннисем те лайăх, ĕçкĕпе иртĕхекен пачах çук. Пурте çĕрĕнкунĕн ĕçлеççĕ, мал ĕмĕтпе пурăнаççĕ», – пĕлтереççĕ Ивановсем.

Ялта ĕç вĕресе тăнине хамăр та курса ĕнентĕмĕр, пĕрисем мунча хутма пĕр машина хурăн вутти тиесе килчĕç. Теприсем тар юхтарсах утă çулатчĕç, виççĕмĕшсем пахчара çĕрулми çумлатчĕç.

Юрăпа Ирина картиш тулли выльăхчĕрлĕх, хур-кăвакал усраççĕ, темĕн тĕрлĕ пахчаçимĕç ӳстереççĕ. Таса та типтерлĕ йăрансен хушшинче ниçта пĕр çумкурăк курăнмарĕ.

**Çулшăн савăнаççĕ**

2008 çулта Анат Чаткасран пуçласа Максим Горький ялне çитиех асфальт çул хывнă. Проектпа килĕшӳллĕн ял вĕçне çити кăна илсе çитерме йышăннă, район ертӳçи Валерий Фадеев тата ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Лариса Петрова çине тăнипе асфальт çула урама та сарнă. «Епле телейлĕ эпир халь. Малтан мĕнле пурăннă-ши? Кĕрлĕ-çурлă вăхăтра пылчăк еплерех çăрăлатчĕ. Юрать, вут-кăвартан Турри сыхланă пире», – теççĕ кунта тĕпленнисем.

Тахçан çул çуккипе асапланнăран ял халăхне унта-кунта тухса çӳреме «Восход» хуçалăх лаша та панă. Пĕр хăнăхнăскерне каялла илес темен, халĕ те унтах пурăнать вăл. Янавара поселокра пурте юратаççĕ, çавна май черетпе пăхаççĕ, вăрман утти, сĕлĕ çитереççĕ.

Кăвак çулăм кашни килтех çунать. Çак пĕчĕк утрав çинче аваллăха ăша хывса, чăваш йăли-йĕркине мала хурса, ваттисене сума суса, хăйсене пуринчен те телейлĕрех туйса пурăнаççĕ кунта çынсем. Уявсенче илемлĕ те çепĕç чăваш халăх юрри-кĕвви, хуткупăс сасси вăрман тăрăх чӳхенсе кайса юнашарти тутар ялĕсене çитсе кунта пурнăç малалла тăсăлнине систерет. Темиçе ĕмĕрте те çĕр çинчен çухалман, килсене халиччен упраса хăварнă Максим Горький поселокĕ тепĕр çĕр çултан та пурăнĕ-ха апла. Чăвашлăха сума сăвакан пĕр урамлă пĕчĕк ялта Максăмсем татах та çураласса шанас килет.

Калама çук килĕшрĕ пире Анат Чаткас тăрăхĕнче. Анчах та 1833 çулта уçнă Хăватсем тăвакан çветтуй Николай чиркĕвне кĕрсе кунта пурăнакан маттур та ĕçчен чăвашсен сывлăхĕшĕн çурта çутса тухма, сиплĕ шыва тутанса пăхма ниепле те вăхăт тупаймарăмăр. Апла ку тăрăха тепĕр хутчен кайса курма сăлтав пулĕ. Кĕр мăнтăрĕпе Анат Чаткаса татах та çитĕпĕр-ха.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕсем.



## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Шпротпа, сырпа



**1 банка шпрот, 4 çĕрулми, 2 кишĕр, 2 çăмарта, 100 грамм сыр, майонез кирлĕ.**

Пĕçернĕ пахчаçимĕçе, çăмартана, сыра теркăламалла. Шпрота вилкăпа вĕтетмелле. Салата сийлесе /шпрот – çĕрулми – кишĕр – çăмарта – сыр/ хăпартмалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле.

### Помидорпа, ветчинапа

**300 грамм помидор, 300 грамм ветчина, пуçлă 2 сухан, майонез кирлĕ.**

**Маринад валли 0,5 стакан уксус, 2 апат кашăкĕ сахăр, 1 чей кашăкĕ тăвар хатĕрлемелле.**

1 стакан шыва тăварпа, сахăрпа, уксуспа пăтратмалла. Çурма çаврашкан каснă сухана маринада ямалла.

Ветчинана – пĕрчĕлесе, помидора тăваткалласа касмалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла.

### Пулă катлечĕ

**700 грамм пулăпа салă фаршĕ, 2 çăмарта, тăвар, техĕмлĕх, вĕтетнĕ сухари, тип çу кирлĕ.**

Фарша çăмартапа, тăварпа, техĕмлĕхпе пăтратмалла. Çак хутăшран катлет тумалла. Кашнине сухарипе йăвалаcа тип çупа ăшаламалла.

### Килти кăлпасси

**500 грамм какай, 2 чей кашăкĕ тăвар, 100 миллилитр сĕт, 1 çăмарта, 2 апат кашăкĕ крахмал, авăртнă хура пăрăç кирлĕ.**

Аш арманĕ витĕр кăларнă какая ытти çимĕçпе пăтратмалла. Çак хутăша кăлпасси майлă çавăрмалла, фольгапа чĕркесе духовкăра пĕçермелле.

### Çырлапа, хăймапа

**1 килограмм çĕр çырли, 300 грамм шĕвĕ хăйма, сахăр кирлĕ.**

Çырлана блендерпа пăтратмалла, шĕвĕ хăйма, сахăр хушмалла. Çак хутăша çырлапа, пĕтнĕк çулçипе илемлетмелле.

### Какай рулечĕ

**500 грамм пăру какайĕ, 300 грамм сысна какайĕ, 300 грамм чăх какайĕ, 100 грамм шампиньон, 2 апат кашăкĕ сар пăрăç, 1 апат кашăкĕ пыл, 1 пуç ыхра, тăвар, пăрăç, 1 апат кашăкĕ тип çу кирлĕ.**

Пăру какайне шаккаса çемçетмелле, тăвар, пăрăç сапмалла, сар пăрăçпа пыл сĕрмелле. Сысна тата чăх какайне аш арманĕ витĕр кăлармалла, тăварпа пăрăç хушмалла. Пăру ашĕ çине фарш, вĕтетнĕ кăмпапа ыхра хумалла. Рулет майлă çавăрмалла. Ăна çулăма чăтăмлă çиппе çыхмалла. Çиелтен сар пăрăç, пыл сĕрмелле. Фольгапа чĕркенĕ какай рулетне духовкăра пĕçермелле. Сивĕниччен йывăр япалапа пусăрăнтармалла.

### Тăпăрч печенийĕ

**Чуста çăрма 3 стакан çăнăх, шăнтнă 300 грамм услам çу, 200 грамм сахăр, 1 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

**Ăшне хума 500 грамм тăпăрч, 4 çăмарта, 180 грамм сахăр, исĕм, ванилин хатĕрлемелле.**

Çăнăха сахăрпа, теркăланă услам çупа, апат содипе хутăштармалла. Хатĕр чуста типĕ тата кĕрпеклĕ пулать. Ăна 2 пая уйăрмалла.

Тăпăрча çăмартапа, сахăрпа, исĕмпе, ванилинпа пăтратмалла. 1 сантиметр хулăнăш йĕтĕрленĕ чустана çатмана сармалла. Ун çине тăпăрч хумалла. Çиелтен юлнă чустапа витмелле. Печение духовкăра 20 минут пĕçермелле. Сĕтел çине лартиччен тăваткалласа касмалла.

### Сухарири пулă

**Пысăкках мар пулă, çăмарта, вĕтетнĕ сухари, çăнăх, лимон, петрушка, тăвар, тип çу кирлĕ.**

Тăвар сапнă пулла çăнăхпа йăваламалла. Пăтратса кăпăклантарнă çăмарта сĕрмелле. Вĕтетнĕ сухарипе йăваламалла. Пулла тип çупа ăшаламалла. Сĕтел çине лартиччен ăна лимон касăкĕпе, вĕтетнĕ петрушкăпа илемлетмелле.

### Турамăш

**2 çĕрулми, 2 хăяр, 2 çăмарта, 1 литр квас, редис, симĕс сухан, укроп, хăйма, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Çĕрулмипе çăмартана пĕçермелле. Редиса, çăмартана, хăяра, çĕрулмие теркăламалла. Симĕс суханпа укропа вĕтетмелле. Çимĕçсене кваспа пăтратмалла, пăрăç, хăйма хушмалла.

## СЫВЛĂХ

# Усăллă та, сиенлĕ те...

**Тĕрлĕ курăкăн сиплĕ енĕсем пирки тăтăш çыратпăр. Анчах та ӳсен-тăран, унпа виçине пĕлмесĕр усă курсан, сиен кӳме те пултарать.**

**Кушак курăкĕн тымарĕн** /валериана/ шывне вăрах тата нумай ĕçме юрамасть. Вăл апат хуранĕн тата чĕре ĕçне усал витĕм кӳме пултарать. Çавнашкалах пуç çаврăнать, хăстарать.

**Тар курăкĕпе** /василистник/ тухтăр ирĕк парсан кăна асăрханса усă курмалла.

**Йыт пыршине** пула хăстарать, варвитти пуçланать.

**Сысна курăкĕ** /горец птичий/ юна çăратать.

**Гранат сĕткенне** шывпа хутăштарса ĕçмелле, унсăрăн тĕрлĕ йӳçек шăл эмальне тата апат хуранне усал витĕм кӳрĕ.

**Гранат хуппин** настойне ытларах ĕçсен пуç çаврăнать, куç вăйĕ чакать, шăнăр туртать.

**Çӳллĕ анăç курăкĕ** /девясил/ хĕрĕх чĕрнеллĕ хĕрарăмсемшĕн, пӳре чирĕпе аптăракансемшĕн сиенлĕ.

**Эмел илеперĕн** /донник лекарственный/ шывне нумай ĕçсен пуç çаврăнма пуçлать, хăстарать, ыйхă килет, хăш чухне пĕвер тата нерв тытăмĕ сиенленет.

**Кайăк хăвипе** /дрок красильный/ наркăмăшланни никотинпа шар курнине аса илтерет.

**Ухмах курăкне** /дурман обыкновенный/ ăша пачах ямасан аванрах.

**Кăвак матрӳшке** /душица обыкновенная/ курăкне пула хырăм ӳкме пултарать.

**Женьшень** тымарĕпе сивĕ вăхăтра кăна усă курмалла. Унăн шывне тăтăш ĕçсен ыйхă вĕçет, пуç тата чĕре ыратма пуçлать, ар хăвачĕ чакать.

## ЧӲРЕЧЕ АНИНЧЕ



- Банан хуппипе сăтăрсан пӳлĕмри чечек çулçи ялкăшма пуçлать. Вăл çулçа тасатать те, калипе апатлантарать те.
- Çулçи сарăхма пуçланă упа саррине /папоротник/ сĕтпе шыв хутăшĕпе /1 литр шыв пуçне 1 стакан сĕт/ шăвармалла.
- Фиалка валли им-çам хатĕрлеме $B_{12}$ витамин кирлĕ. Ăна аптекăра туянмалла. 1 капсулăна 1 литр шывра ирĕлтермелле. Çак хутăшпа чечеке икĕ эрнере пĕрре шăварма юрать.

## ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Кăмрăк çитермелле



**Ешĕл, йĕпе курăк çитерсен кроликсен хырăмĕ кӳпĕнет теççĕ. Кун пек чухне чĕрчуна епле пулăшмалла-ши?**

**А.ЕРШОВ.**

**Çĕрпӳ районĕ.**

Кролике, чăнах та, йĕпе курăк çитерме юрамасть. Ирхи сывлăмпа е çумăр хыççăн çулнăскерне кăштах типĕтмелле – ытлашши нӳрĕ ан пултăр. Енчен те кролик ун пеккипе сăйланма ĕлкĕрнĕ, çавăнпах хырăмĕ кӳпĕннĕ тĕк, вĕсене кăмрăк çитермелле. Эмел тӳмине тĕпретмелле, кăштах шыв хушса ĕçтермелле. Кун пек чухне пĕр çыннăн кролике çурăмĕ çине хурса тытмалла, теприн кашăкпа эмел ĕçтермелле. Тепрер сехетренех чĕрчун хăйне лайăх туйма пуçлĕ.

## ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Ӳсен-тăран хӳтĕлевçи



Симĕс сухан саралма пуçларĕ-и? Çакă азот çитменнине палăртать. Апла тăк нашатырь спирчĕн хутăшĕ пулăшĕ. 10 литр шыва 3 апат кашăкĕ нашатырь спирчĕпе пăтратмалла. Çак хутăшпа сухан йăранне каçхине шăвармалла. Вăл çĕре те имçамлать, вĕтĕ шăнана та хăратать.

Курăк пыйти йывăç тата тĕм çулçине тĕппипех пĕтерме пултарать. Сăтăрçăран хăтăлма çакнашкал хутăш хатĕрлемелле: 50 миллилитр нашатырь спирчĕпе хуçалăх супăнĕн 1/4-мĕш пайне 1 витре шыва ямалла.

Пӳлĕмри чечексене те вĕтĕ шăна тапăнать. Аммиак хутăшĕпе /2 литр шыв пуçне 25 миллилитр спирт кирлĕ/ унран хăтăлма май пур. Нумай чечекшĕн /лили, клематис, герань/ çак хутăш – лайăх им-çам. Çавнашкалах çĕр çине авăртнă хĕрлĕ е хура пăрăç сапни те вĕтĕ шăнана пĕтерме пулăшĕ.

## ШУТА ИЛМЕ

- ✓ Водород перекиçĕ тумтир çинчи вараланчăка лайăх тасатать. Антисептика таса мар çĕре сĕрмелле. 10 минутран япалана çумалла. Тĕслĕ çи-пуç çинче перекиç витĕмне тӳнтер енчен тĕрĕслĕр.
- ✓ Апат содипе чей пĕчĕк хутаçĕ автомобиль салонĕнчи, шкапри, сĕтел туртминчи, сивĕтмĕшри ырă мар шăршăран хăтăлма пулăшаççĕ.
- ✓ Брикетри кăмрăк нӳрĕке çăтать. Ăна ваннăна хурсан, сăмахран, стена хăвăртах типĕ. Кăмрăк çавнашкалах маччари, путвалти, нӳхрепри сывлăша йĕркелĕ. Брикета икĕ уйăхра пĕрре улăштармалла.
- ✓ Ата-пушмак кремĕ пĕтнĕ-и? Ăна алла сĕрмелли кремпа улăштарма пулать. Ун витĕмĕпе сăран çемçелет, ялкăшма пуçлать.
- ✓ Сахăр курăкпа вараланнине тасатма пулăшать. Симĕс вырăна йĕпетмелле, сахăр сапмалла та... 1 сехетрен япалана çумалла.
- ✓ Шурă эрехпе йĕпетнĕ пластырь ӳт çумĕнчен çăмăллăнах уйăрлать. Çĕнĕ савăт-сапа е тĕкĕр çинчи этикетка йĕр хăварасран шикленетĕр-и? Çак вырăна эрехпе йĕпетнĕ губка тытмалла, унтан ăшă шывпа çумалла.
- ✓ Шăл пастисĕр похода кайнă-и? Ун вырăнне йывăç кăмрăкĕпе усă курма пулать. Тӳсе вĕтетнĕскер шăла та шуратать, çăвара та бактерисенчен тасатать.
- ✓ Чĕрне сăрламалли тĕссĕр лак арча хупăлчи е куçлăх харши çинчи винтиксене çирĕплетме пулăшать. Эреше, çипуça, пушмака илемлетекен тĕрлĕ тĕслĕ чула та тĕссĕр лакпа витсен япала пайĕ çухалса юлмĕ.
- ✓ Кĕленче тĕпĕнче юлнă хĕрлĕ эрехе пăр формине ярса лартма юрать. Кайран ăна яшкана е соуса хушма пулĕ.
- ✓ Вĕтĕ эрешлĕ вазăна çуса тасатма çăмăлах мар. Ун пек чухне савăта тултарнă шывра Алко-Зельцер 2 тӳмине ирĕлтермелле. Хăмпăсем кашни кĕтесе тасатса кăларĕç.
- ✓ Çĕрулми е макарон пĕçернĕ шыва тăкмалла мар. Унта пӳлĕмри чечексене кирлĕ япаласем пур.



ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

# Кӳршĕ кинĕ

Иртнĕ эрнере Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан Татьяна чунне уçса çырнине вуларăм та пирĕн кӳршĕсен кинĕ шăрçаланăнах туйăнчĕ. Паллах, ун пек хĕрарăм çĕр çинче пĕрре кăна мар. Анчах эпĕ калаканни те упăшкипе çаплах пурăнать.

Асапланать темелле-ши тепĕр хутчен? Иртĕхет. Унсăрăн каялла йышăннă пулĕччĕ-и? Хăш-пĕр саманта уçăмлатни те кирлĕ-тĕр.

Ячĕсем те çаплах-çке – Ванюкпа Танюк. Пурнăçри пулăмсем те пĕрешкел.

Кӳршĕ каччи те техникумра вĕреннĕ чухне авланчĕ. Хула хĕрне качча илекенскерне ялти чылай яш ăмсанчĕ-тĕр. Ара, çамрăк чухне куç илеме курать-çке. Танюк вара чĕрнисене хĕретсе, капăрланса çӳретчĕ. Шурă шăлаварĕ те такама та илĕртетчĕ çав. Эпир те, ял хĕрарăмĕсем, Танюк кукамăшĕ патне килсен ăна ăмсанса пăхаттăмăр.

Шкулта вĕреннĕ чухне хамăр ял хĕрĕпе туслă çӳрерĕ Ванюк. Надя çав тери тирпейлĕ те сăпайлăччĕ. Савнийĕ чупкăнччĕ çав. Ара, Ванюк çамрăклах ялти миçе хĕрарăм патне çитмен пуль? Тăлăх арăмсене те, çамрăк хĕрсене те тиркемерĕ вăл. Тĕрĕссипе, йăхĕ те çапласкер-ха – ахальтен «ясарсем» темен. Аслашшĕ те упăшкисене вăрçăран кĕтсе илеймен хĕрарăмсене йăпатнă теççĕ. Ашшĕ те килне таврăнмасăр çӳретчĕ, ватлăх енне сулăнсан çеç лăпланчĕ. Ывăлĕ те çавнашкал. Икĕ тăван пĕр хĕрарăм патне çӳренине те пĕрре мар калаçрĕç ялта.

Пĕр хушăран Начукпа Ванюк хушшинче хура кушак каçса кайрĕ. Паллах, куншăн хĕр тăванĕсем савăнчĕç çеç. Ясар кĕрӳ кама тивĕçтерĕ?

Часах йĕкĕтĕн салтака кайма та ят тухрĕ. Техникумра вĕреннине пăхмасăр çĕршыв умĕнчи тивĕçне пурнăçлама кайрĕ ентешĕмĕр. Ăсату каçĕнче Танюк та пулнă теççĕ. Шăпах çавăн чухне пĕрне-пĕри куç хывнă та икĕ çамрăк. Хула хĕрĕ ял каччине кĕтсе илме шантарнă.

Çамрăксен туйăмĕ мĕн тери вĕри те çирĕп пулнине эпир пĕлес çук. Анчах салтакран таврăнсан çур çултан вĕсем чăннипех туй кĕрлеттерчĕç. Ванюк техникумра вĕреннине те пăхмарĕç. Пуян кине вĕçертес мар терĕç-ши? Ара, Зоя инкепе Сантăр пиччен хăтипе тăхлачи шăпах укçаллисен йышĕнчен-çке. Ывăлне чаплă туй туса парас тесе ялтисем те сахал мар тăрăшрĕç-ха. Йышлă хăнине хулари ресторантах ĕçтерчĕç-çитерчĕç. Паян куншăн нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Вунпилĕк çул каялла вара туйсене ялта кĕрлеттеретчĕç, кафе таврашĕ пирки тĕлленекен те пулман.

Чунне уçакан хĕрарăмăнни пекех пирĕн Ванюк та часах аякри хуласене çӳреме пуçларĕ. Çемье хушăнасса кĕтекенскерсене хĕрĕн ашшĕпе амăшĕ хваттер туянса панă сас-хура та ялта часах сарăлчĕ. Куншăн ăмсанакан та тупăнчех пулĕ ун чухне.

Кӳршĕ ывăлĕпе кинĕ еплерех килĕштернине эпир тĕрĕс каласа кăтартаяс çук – хăнана килсен хăйсене еплерех тытнипе çеç хаклаятпăр. Анчах кин кахалрах пулчĕ курăнать. Хула хĕрĕ – мĕн тăвăн? Уçă сывлăша питех те сайра килчĕ вăл, Ванюк çавăнпах час-часах пĕччен çӳрерĕ. Арăмĕ маттуррине курманпа пĕрех.

Пĕррехинче пахчари пĕр йăран кишĕре епле çумласа тухрĕ-ши? Эпир ăна çывăрса кайрĕ пулĕ терĕмĕр. Аран-аран куçать те. Пĕр вырăнта мĕн суйларĕ тульккӑш? Кин ĕçченлĕхĕ çакăнта палăрчĕ те. Каярах вăл пачах килми пулчĕ. Зоя инке савăт та çумасть, апат патне те пымасть тесе хама та каламан мар. Ара, амăшĕшĕн ачи çеç телейлĕ пултăр...

Ял çăварĕ хапха мар. Шăрпăк пĕрчи чĕртсен те кăвар тивет, çулăмран сĕрĕм тухатех. Часах мăшăр шăкăл-шăкăл мар, кушакпа йытă пек пурăннине илтрĕмĕр. Ялта пĕр çын сиссен ыттисем пĕлмеççĕ-и вара?

Ванюк епле чупкăн пулнă – çаплах юлнă иккен. Мăшăр каçсерен юттисене ăшăтса çӳрени мĕнле хĕрарăма вĕчĕрхентермĕ? Паллах, хĕрарăм чĕнетех. Арçын вара мăкăртатнине юратмасть. Анчах çакна кӳршĕсем те, ачисем те тĕплĕ пытарма тăрăшрĕç, çын çинче ят каясран ытла та шикленеççĕ çав. Темле пулсан та хăйсем пирки лайăх калаттарас килет мар-и?

Кĕçех Ванюк юттисен хушшинче пĕр каçлăх киленӳ ширанă сас-хура сарăлчĕ. Варука чунран савнине пĕлтĕмĕр. Шупашкарта пирĕн ялтан тухнисем те сахал мар пурăнаççĕ-çке. Ванюк çĕнĕ савни патне тăтăшах çӳренине те, тепĕр чухне эрнипех ун патĕнчен тухма пĕлменнине те пĕр хăлхаран тепĕрне пăшăлтатаççĕ.

Анчах Танюк вĕсене сивĕтнĕ теççĕ. Çамрăк хĕр пуçне çавăрассишĕн арçын хăй çемьеллине те каламан пулать. Çакна сиссенех арçынна хăйĕн патĕнче текех тытман Варук.

Танюкăн кăмăлĕ пирки те асăнса хăвармалла-тăр. Ун пек çынсене çĕр епле чăтать-ши тульккӑш? Ытла та вĕчĕрхенӳллĕ те усал-çке. Мăнкăмăлланас, каçăрăлас йăли те çав тери пысăк. Унран та ытла, хăйĕнчен чаплă çын çук тесе шухăшлать-иç. Укçа çинче иртĕхнĕ çав. Халĕ те упăшкине юратнăран мар, мулĕшĕнех тытса тăрать. Ара, пысăк шалăва урăх хĕрарăмпа пайлас килтĕр-и? Тем тесен те чунсăр çав хĕрарăм. Çавăнпах упăшки чупкăннишĕн эпĕ ăна шеллеместĕп те.

**ВАЛЕНТИНА Д.**
Патăрьел районĕ.

ВĂТ, ТĔНЧЕ

# Ятлаçман, пурлăх пайламан

Эпир нумай хутлă çуртра чи çӳлте пурăнатпăр. Юрать-ха лифт лайăхах ĕçлет – çуран çӳремелле мар. Пĕрре упăшкапа иксĕмĕр кавир-паласа шаккаса тасатма шухăш тытрăмăр.

«Çурт тавра çаврăнма инçе. Ахаль те ĕçре ывăннă. Атя, хатĕр-хĕтĕре чӳречерен перĕпĕр», – ăс пачĕ кил хуçи. Мĕншĕн килĕшес мар? Эпĕ ăна шеллерĕм. Чăнах, çĕклемĕ йывăр. Аялта никамах та курăнмарĕ. Çапла хăтланнине çынсем курса-сиссе юлаймасса шантăм.

Тусанлă япаласене кĕске вăхăтрах чӳречерен кăларса ывăтрăмăр. Хамăрăн япаласем патне çитнĕ çĕре картишĕнче халăх пуçтарăнма ĕлкĕрнĕччĕ. Хăш вăхăтра асăрханă? «Арăмĕпе упăшки вăрçăнма пуçланă та пурлăха пайлаççĕ», – теççĕ хайхисем. Мăшăрăмпа иксĕмĕр васкаса утнине курсан çынсем пăрăнса тăчĕç, пире çул пачĕç. Эпир пĕр сăмах чĕнмесĕрех ĕçе пуçăнтăмăр. Çынсем саланчĕç. Ахăртнех, никамăн та тусан çăтас килмерĕ.

Урăх унашкал туман. Çынсене мĕншĕн калаçтарас? «Çавсем лăпкă пурăнма пĕлмеççĕ», – тейĕç тата инçетрен сăнакансем.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

АХ, АНЧАХ...

# Çырла пиçнĕ вăхăтра



"Ир такăнсан – каçченех", – тесе ахальтен каламаççĕ çав. Ман пурнăçăмра шăпах çавнашкал пулса иртрĕ те. Хам айванлăхăма пулах тĕрĕс çулран пăрăнтăм. Шкулта лайăх вĕренеттĕм, учительсем те ман çитĕнӳсемшĕн хĕпĕртетчĕç. Экзаменсене йĕркеллĕ тытнă хыççăн документсене медицина факультетне кайса патăм. Эпĕ тухтăр профессине суйласа илнине пĕлсен аттепе анне хамран та ытларах савăнчĕç. Манран телейли те çукчĕ çав вăхăтра. Университетра та чи лайăх вĕренекенсенчен пĕриччĕ эпĕ, пĕрремĕш курса мĕнпур пиллĕкпе вĕçлерĕм. Салтакран тин çеç таврăннă Анаткас каччи куç хывнăччĕ мана. Клубра та, хапха умĕнче те сыхласа тăратчĕ Миша. Çамрăк чухне темшĕн шуххисене, хăюллисене килĕштеретпĕр çав эпир. Мотоциклпа таçта та илсе çитеретчĕ çĕр каçа. Пĕррехинче çырла çиме тесе ял вĕçĕнчи Хурăнлăха илсе кайрĕ. Чун теме сисрĕ-ши, тĕттĕмленме тытăнсан Мишăна киле леçсе яма ыйтрăм. Çупкăм-çупкăм çырли пиççсех çитейменнипе пăртак йӳçĕрехчĕ. "Çак ытарайми çуллахи каç халех кам выртса çывăртăр, кинеми мар пуль эс", – терĕ те мана хăйĕн вĕри ытамне илчĕ. Икĕ пылак тута пĕрлешнĕ хыççăн вăл мана хăй çумне тата хытăрах пăчăртарĕ. Малтан эпĕ ăна шӳтлет кăна тесе шухăшларăм, анчах та Мишăн сирсен те сирĕлми вăйлă та ачаш алли тахăш самантра çӳхе кĕпе айне шуса кĕме те ĕлкĕрчĕ. Ăна, хĕрӳскерне, çак самантра ниепле те чарма çукчĕ. Тен, хам та çинех тăмарăм-ши? Миша хăй ытамĕнчен вĕçертмерĕ çав тĕттĕм каç, кĕçех авланасси, мана качча илесси пирки хăлхаран пăшăлтатрĕ. Çурхи хĕвелпе, ылтăнпа танлаштарса ĕмĕр-ĕмĕр алă çинче йăтса çӳреме сăмах пачĕ.

Тул çутăласпа кăна кĕтĕм киле. Çĕрĕпе çывăрманнипе ир енне куçăм шыçăннăччĕ. Çырла уçланкинчи кĕтмен çĕртен пулса иртнĕ хĕрӳ юрату тепĕр кунне пуçăмран та тухмарĕ. Мишăпа тĕл пулса калаçас тесе хăвăртрах каç пуласса кĕтрĕм. Анчах та вăл клубра курăнмарĕ. Киле пĕччене утма тиврĕ. Хапха умĕнче кĕтсе тăрать пуль-ха тесе лăплантартăм хама. Унта та никам çукран умри шур хурăна ыталаса ĕсĕклесех макăртăм. Пурнăçăмра пĕрремĕш хут хама хам айăпларăм. Тепĕр кунне тантăшсенчен Миша çурçĕре ĕçлеме тухса кайни пирки илтрĕм. Манпа сывпуллашмасăрах çула тухни пачах та тĕлĕнтермерĕ. Арçыннăн мĕншĕн кулянмалла? Тутанса курнă, çитет апла... Ытти ыйтăва хĕрача хăй татса патăр. Ирĕксĕрлесе парăнтарман. Çие юласран, ял çинче ят каясран хăрамалли çук каччăн.

Вĕренме кайма та вăхăт çитрĕ. Мишăран çу тăршшĕпе пĕр çыру та кĕтсе илеймерĕм. Пыл хурчĕ пек – сĕткенĕме ĕмсе илчĕ те урăх çав чечек çине пĕрре те пырса лармарĕ.

Физкультура урокĕнче çерем çине персе аннине пачах та астумастăп. Тепĕр кунне палатăра тăна кĕтĕм. Тухтăр çие юлни пирки пĕлтерсен пит çăмарти тăрăх вĕри куççуль юхрĕ те юхрĕ. Пуринчен ытларах мана малашне мĕнле вĕренесси канăç памарĕ. Вăхăт хĕсĕккине пăхмасăрах кану кунĕсенче тăван яла вĕçтертĕм. Эпĕ кĕтмен çĕртен çитсе тăни аннене те тĕлĕнтерчĕ. Çав çуллахи каç çылăха кĕни çинчен нимĕн пытармасăрах чи çывăх çыннăма каласа кăтартрăм. "Хулана куçса пыратăп, çурат, хĕрĕм, май пур таран пулăшăпăр, вĕренме çеç ан пăрах. Аçу та ăнланĕ", – терĕ анне йăвашшăн. Ялта çынран мĕн те пулсан пытарайăн-и? Кăштахран Миша та таврăнчĕ. Туй тумашкăн укçа ĕçлесе илме кайнă-мĕн вăл. Мана тепĕр уйăхран çураçма килчĕç. Миша темшĕн сиввĕн çеç калаçкаларĕ, тĕлпулма та шухăшламарĕ. Кăштахран каçсерен вăл урăххипе йăпаннине пĕлтĕм. Тантăшсем суйса каламан иккен. Анаткас хĕрĕпе çавăтăнса пынине хам та курса юлтăм пĕр каç. Кайран икĕ мĕлке Гальăсен анкартине кĕрсе çухалчĕ. Çавнашкал çынпа çемье çавăрма пулать-и вара? Ял çыннисенчен намăс тесе качча тухса лармаллаччĕ-и-ха ăна? Çураçнă пулин те Мишăпа çемье çавăрма килĕшмерĕм. Аттепе анне те ӳкĕте кĕртеймерĕç. Яла текех пĕрре те каймарăм. Йывăрччĕ, анчах та шăла çыртса вĕренсе тухрăм. Ача та çумрах çитĕнчĕ. Уншăн аттепе аннене тем пек пысăк тав. Хĕр пĕрчи кĕçех вунпилĕк çул тултарать. Хăй пурнăçĕнче ман йăнăша çеç ан тутăрччĕ вăл. Миша ялти миçе хĕрарăм патне çитмерĕ-ши, анчах та пĕринпе те телей тупаймарĕ. Ман çамрăклăхăма хуçса хунăшăнах Турри такăнтарчĕ-ши? Вăл та пĕччен, эпĕ те мăшăрсăр. Пиçсе çитме ĕлкĕреймен хĕрхӳ çырлана ытла та васкаса татрăмăр çав. Пылакĕ туйăнмарĕ те, йӳççи вара паянхи кун та çăвартах.

**НАДЕЖДА.**
Шупашкар хули.